им. М. Горького
№

ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Август
26
юнкун
№ 167 (9076)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте!

РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ. **А. Мешков, И. Чирков.**—Ÿсет, чечекленет Элĕк (1 стр.).

Тырпула хăвăртрах пуçтарса кĕртер, государствăна тыра памалли обязательствăна срокчен пурнăçлар! (2 стр.).

А. Отачкин.—Шкулти пуçламăш парторганизаци (2 стр.).

ФЕЛЬЕТОН. **Н. Волков.**—Çам кама улталать? (2 стр.).

А. Азизян.—Халăхсен туслăхĕ—нумай нациллĕ Совет государствин тĕп никĕсĕ (3 стр.).

П. Викторов, А. Павлов, Н. Орлов.—Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме тăрăшмаççĕ (3 стр.).

Польша Халăх Республикин правительстви пĕлтерни (4 стр.).

Вильгельм Пик правительство делегацине йышăннă (4 стр.).

Тыткăнри çар çыннисене таварса пани (4 стр.).

Францири забастовка (4 стр.).

Наци пухăвĕн бюровĕ парламентăн чрезвычайнăй сессине пухма килĕшмен (4 стр.).

ВРАЧ ÇАНАШЕСЕМ. **К. Пайраш.**—Вар-хырăм чирĕсенчен сыхланмалли майсем (4 стр.).

Çăмăл атлетсен республикăри ăмăртăвĕ (4 стр.).

Агитаци ĕçлĕхлĕ те витĕмлĕ пулмалла

Пирĕн асла Тăван çĕршыв коммунизм обществи тумалли çулпа ăнăçлăн малалла пырать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политики социализмла халăх хуçалăхне вĕçĕмсĕр çĕклентерсе малалла аталантарас, ĕçсыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатас тата культурăлла шайне ÿстерес тĕллев тытать. Çак политика СССР Верховнăй Совечĕ 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата Ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă законсенче яр-уççăн палăрса тăрать. СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче каланă сăмахра партипе правительство промышленноçпа ялхуçалăх енĕпе вăраха ямасăр пурнăçлама палăртнă ĕçсем çинчен пĕлтерчĕ. Çак ĕçсене пурнăçлани тĕп задачăна — рабочисен, колхозниксен, интеллигенции, мĕнпур совет çыннисен пурнăçне малалла лайăхлатса пырас задачăна тата ăнăçлăрах татса пама пулăшать.

Пирĕн çĕршыв умĕнче хуçалăхпа культура строительстви тĕлĕшпе тăракан пысăк задачăсем совет çыннисене тата лайăхрах ĕçлеме, резервсемпе туллин усă курма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме хушаççĕ. Çакăн пек тăвас тесен, кашни ĕçсынни партипе правительство политикине тĕпĕн ăнланса илмелле. Совет çыннисем парти политикине мĕн чухлĕ лайăхрах ăнланаççĕ, ăна пурнăçа кĕртессишĕн çавăн чухлĕ активлăрах кĕрешеççĕ, çавăн чухлĕ хуçалăхпа культура строительстви ăнăçлăрах пулса пырать. Ĕçсыннисене коммунизмла воспитани памалли хăватлă майсенчен пĕри вăл—политикăлла агитаци пулса тăрать. Политикăлла агитаци ĕçсыннисене партипе правительство тытса пыракан шалти тата тулашри политикăна тарăнăн ăнланса илме пулăшмалла, халăх вăйне çак политикăна пурнăçлама мобилизацилемелле. Пирĕн агитаци вăйĕ—вăл пурнăçпа таччăн çыхăнса тăнинче, тĕрĕс, витĕмлĕ пулнинче. Ăçта политикăлла агитацие лайăх йĕркеленĕ, ăна куллен, тĕплĕн, витĕмлĕн туса пыраççĕ, ăна умра тăракан политикăлла-хуçалăхла задачăсемпе таччăн çыхăнтараççĕ, çавăнта производство планĕсене ăнăçлă тултараççĕ, ĕç тухăçлăхĕ ÿсет, продукци пахалăхĕ лайăхланать, унăн хăйне ларакан хакĕ тăтăшах чакать. Тĕслĕхрен, Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи партком, цехсенчи парторганизацисем политикăлла агитаци ĕçĕпе куллен интересленеççĕ, агитколлективсемпе агитаторсен ĕçне хутшăнаççĕ, вĕсене тăтăшах инструкцилесе тăраççĕ, агитацилле-массăлла ĕçе производствăн тĕп участокĕсенче вăйлатса пыраççĕ. Çакă вăл завод коллективĕн ĕçне чылай лайăхлатма пулăшать. Электроаппаратура заводĕ кварталтан кавартала производство планне тултарса пырать, СССР Электропромышленноçпа электростанцисен министерствипе ВЦСПС-ăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче çирĕппĕн тытса тăрать.

Анчах нумай предприятисенче, колхозсенче, машина-трактор станцийĕсенче агитацилле-массăлла ĕçĕн шайĕ, унăн анлăшĕ, идейăлла содержанийĕ умра тăракан задачăсен çÿлĕшĕнче тăмасть-ха. Тĕслĕхрен, Вăрнар районĕнчи чылай колхозсенче тата МТС-ра агитацилле-массăлла ĕçе юхăнтарса янă. Райком бюровĕ тата унăн секретарĕсем Александров, Шлюпкин, Амвросьева юлташсем çак çитменлĕхе курмаççĕ, унпа килĕшсе лараççĕ, агитколлективсемпе агитаторсен ĕçне ертсе пымаççĕ. Вĕсем агитколлективсене ертсе пырас ĕçе пĕтĕмпех пуçламăш парторганизаци секретарĕсене шанса панă. Çавăн пирки те ĕнтĕ уйрăм агитколлективсем тырпул пухса кĕртнĕ, государствăна тырă панă çĕрте ĕçлекен колхозниксемпе механизаторсем хушшинче политикăлла агитацие тивĕçлипе сарса яман. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра агитаторсенчен çурри ытла нимĕн те тумасть. Чылай агитколлективсенче агитацилле-массăлла ĕç хаçатсем вуласа панипех иртсе каять. Агитаторсем каласусем иртермеççĕ, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политики çинчен çителĕксĕр ăнлантарса параççĕ, колхоз производствинче малта пыракан колхозниксен лайăх опытне пĕтĕçтермеççĕ, вăл опыта колхозниксем хушшинче сармаççĕ, обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен калаçа памаççĕ. Район хальхи вăхăтра ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе кая юлса пыни, чылай енчен, политикăлла агитацие çителĕксĕр йĕркеленинчен килет.

Агитаци ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл—предприяти, колхоз пурнăçĕнчи ыйтусене айккинелле пăрса хăварни пулать.

Политикăлла агитаци государствăпа ĕç дисциплинине тĕреклетессишĕн кĕрешес çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Çав вăхăтрах агитаци ĕçĕнче çак ыйтусем çине тивĕçлипе пăхни çук-ха. Политикăлла агитаци ĕçсыннисене ĕç çине, обществăлла харпăрлăх çине социализмла пăхма, революцилле сыхăлăха ÿстерме пулăшмалла.

Политикăлла агитацие организацилес ĕçри пысăк çитменлĕх вăл формализм пулать. Хăшпĕр районсенче парти организацийĕсем каласусен, докладсен, лекцисен шучĕпе ытларах интересленеççĕ, çав вăхăтрах вĕсен содержанийĕ çинчен манаççĕ. Агитаци çине кампанилле пăхас йĕркене те пĕтермен-ха эпир. Академи театрĕнчи пуçламăш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче палăртнă тăрăх, агитаторсем ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕ хыççăн ĕçсыннисем хушшинче ĕçлеме пăрахнă.

КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен чылай работникĕсем агитаторсем иртерекен каласусенче, докладсенче пулмаççĕ, каласусемпе докладсен содержанийĕпе интересленмеççĕ, хăшпĕр докладчиксемпе агитаторсем уйрăм ыйтусене час-часах йăнăш ăнлантарса панине курмасăр, асăрхамасăр иртеççĕ, вăл йăнăшсем пирки шарламасăр тăраççĕ. Политикăлла агитаци содержанийĕ çинчен парти комитечĕсем сайра-хутра кăна сÿтсе яваççĕ.

Ĕçсыннисем хушшинче агитаци ĕçне лайăхлатса пырасси, унăн идейăлла шайне малалла хăпартасси, чи малтан, агитаторсенчен, вĕсене куллен воспитани парса пынинчен килет. Анчах чылай парторганизацисем агитаторсене суйласа илес тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлемеççĕ, агитаци туса пыма çителĕксĕр хатĕрленнĕ çынсене хушаççĕ, агитаторсен семинарĕсене иртермеççĕ. Тĕслĕхрен, Октябрьски районĕнчи агитколлективсенче агитаторсен семинарĕсене ăнсăртран кăна иртереççĕ. Чылай районсенче агитаторсен пухăвĕсене сайра иртереççĕ.

Политикăлла агитаци ĕçне ертсе пыракан кадрсене çаплах çителĕксĕр хутшăнтараççĕ. Уйрăм работниксем, докладсене тĕплĕн хатĕрленес вырăнне, ытти çынсем çырса панă тăрăх «доклад» тăваççĕ, тĕрĕсрех каласан, çынсем çырнă хатĕр шухăшсене вуласа параççĕ. Паллах, ун пек докладсенче вырăнти фактсене анализ тăвасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Çакнашкал докладсем чĕре патне пымаççĕ. Уйрăм руководительсем политикăлла агитаци çине çакăн пек чунсăр пăхни вăл пирĕн партин традицийĕсемпе нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмасть, вăл парти интересĕсене сиен кÿрет кăна.

Политикăлла агитаци пĕтĕм халăха, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенчи работниксене, халăхăн тĕрлĕ сийĕсене пырса тивет. Çакă вăл парти организацийĕсене агитаци ĕçне вăйлатма, унăн организациллĕхне ÿстерме хушать. Агитаци халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче ĕçлекен мĕнпур работниксене, вĕсен тĕрлĕ ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултартăр. Агитаци ĕçне строительство организацийĕсенче, машина-трактор станцисенче, вăрман промышленность предприятийĕсенче, фабрикăсемпе заводсенчи кăçхи сменăсенче татăклăн вăйлатни кирлĕ. Калас пулать, халлĕхе хуçалăхăн çак отраслĕсенче агитаци ĕçĕ çаплах ытла та çителĕксĕр тăрать-ха.

Политикăлла агитаци вăл ячĕшĕн тумалли ĕç мар, парти политикине пурнăça кĕртессишĕн кĕрешмелли хĕçпăшал. Ку вăл акă мĕне пĕлтерет: агитаци парти ĕçĕн, парти организацийĕсен хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçĕн уйрăлми пĕр пайĕ пулса тăмалла.

Хальхи вăхăтра политикăлла агитаци ĕçĕнче тĕп вырăнта тăракан задача вăл ĕçсыннисене пирĕн партипе правительствăн политики çинчен, СССР Верховнăй Совечĕн решенийĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса парасси, ĕçсыннисен анлă массисене хуçалăхпа культура строительствин планĕсене пурнăçлама мобилизацилесси пулать.

Ялти агитаторсен уйрăмах тырпул пухса кĕртес, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татас ĕçе хăвăртрах вĕçлесе çитерессишĕн кĕрешесси çине тимлĕн пăхмалла. Хулари агитаторсен, политикăлла агитацин мĕнпур формисемпе анлăн усă курса, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн, суту-илÿ предприятийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн, çурт-йĕр, культурăпа йăла строительствин программине пурнăçлассишĕн кĕрешмелле.

Парти организацийĕсем енчен политикăлла агитацие куллен-кун, конкретлă ертсе пыни, унăн идейăлла шайне хăпартни, çапла вара коммунизмшăн кĕрешес ĕçре Коммунистсен партийĕн аллинче хăватлă хĕçпăшал пулса тăракан агитаци витĕмлĕхне ÿстерни кирлĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕн

1953 çулхи августăн 25-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРÿ

Августăн 25-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк двореца, РСФСР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ уçăлнă.

Сессие РСФСР Верховнăй Совет Председателĕ **Л. Н. Соловьев** депутат уçнă.

РСФСР Верховнăй Совечĕ Мандат комиссийĕн председателĕ **И. Т. Гришин** депутат РСФСР Верховнăй Советне пилĕк суйлав округĕнче тухса ÿкнĕ депутатсем вырăнне çĕнĕрен суйланă депутатсен полномочийĕсене тĕрĕсленин результачĕсем çинчен тунă доклада итленĕ.

В. И. Пономарев депутат сĕннипе Верховнăй Совет Мандат комиссийĕн доклачĕ тăрăх çакăн пек постановлени йышăннă:

«Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1. РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат комиссийĕн докладне çирĕплетес.

2. Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Советне 184-мĕш Сковородински суйлав округĕ тата 495-мĕш Сталински суйлав округĕ тăрăх 1952 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче, 92-мĕш Ломоносовски суйлав округĕ тата 579-мĕш Рославль суйлав округĕ тăрăх 1952 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнче, 142-мĕш Енисейски суйлав округĕ тăрăх 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче суйланă депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнас».

РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ **Л. Н. Соловьев** депутат сессире пăхса тухма çакăн пек ыйтусем тăратни çинчен пĕлтерет:

1. Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи Государство бюджетне тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен калакан отчета çирĕплетесси.

Ку ыйтăва РСФСР Министрĕсен Совечĕ тăратать.

2. РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси.

Ку ыйтăва РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ тăратать.

Н. И. Бобровников депутат сĕннипе Верховнăй Совет, пурте пĕр саслă пулса, çав ыйтусене сесси кун йĕркине кĕртнĕ.

Унтан Председатель РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен доклад тума РСФСР Финанс министрне **И. И. Фадеев** депутата сăмах панă.

Фадеев юлташăн доклачĕ хыççăн Верховнăй Совет РСФСР Верховнăй Совечĕн Бюджет комиссийĕн председателĕ **С. П. Афанасьев** депутат тунă содоклада итленĕ.

Çакăнпа РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăннă.

Çу завочĕсем çĕнĕ сезон умĕн

Çĕршыври çу завочĕсем кăçал пухса илнĕ ÿсентăран вăрринчен çу кăларма тытăнаççĕ. Молдаван ССР-ĕнчи тата Краснодар крайĕнчи предприятисем хĕвелçаврăнăш йышăнма тытăннă. Вĕсем сентябрь уйăхĕсенче малтанхи продукци параççĕ.

СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерствин Главрасжирмасло начальникĕ Науменко юлташ ТАСС корреспондентне пĕлтернĕ тăрăх, çитес сезонта çу çапакан çĕнĕ заводсем, çу комбиначĕсем, цехсем ĕçлеме пуçлаççĕ.

Узбек ССР-ĕнче Усть-Курганри çу завочĕ ĕçлеме тытăннă. Бухарара çĕнĕрен туса лартнă çу завочĕ ĕçлеме пуçлать. Сталинград, Воронеж облаçĕсенчи тата ытти вырăнсенчи предприятисене çĕнетсе пысăклатаççĕ.

Ÿсентăран çăвĕн пахалăхне лайăхлатасси çине уйрăмах тимлĕн пăхаççĕ. Днепропетровскинчи çу комбинатĕнче, Одессăри, Кировоградри, Миллеровори, Кропоткинскри тата ытти вырăнсенчи çу завочĕсенче чĕртавара лайăх тасатма тата пĕрремĕш сортлă çусем кăларма пулăшакан цехсем туса лартнă.

Пысăк пахалăхлă маргарин çăвĕ туса кăларасси ÿсет. Витаминлă маргарин çăвĕсем, çавăн пекех диета, шоколад çăвĕсем туса кăларма тытăнаççĕ. Ку йышши çусен калорилĕхĕ тата тутлăхĕ пысăк. Çĕнĕ сортлă майонезсем туса кăларма тытăнаççĕ. Майонез—аш, пулă, пахчаçимĕç апачĕсене тутă кĕртет.

Вăрçăччен хи вăхăтрипе танлаштарсан, пысăк пахалăхлă маргарин туса кăларасси виçĕ хута яхăн ÿснĕ. Саратовра, Сталинградра. Ереванре, Ташкентра, Свердловскра, Хабаровскра тата ытти хуласенче те маргарин комбиначĕсемпе предприятийĕсем туса лартаççĕ. Цехсем поток тăрăх ĕçлеме пуçлаççĕ. Çакă вăл продукци пахалăхне лайăхлатать тата унăн хăйне ларакан хакне йÿнетет (ТАСС).

ХИСЕП ХĂМИ

Райисполкомсемпе КПСС райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата государствăна тырă памалли обязательствăсене срокчен пурнăçланăшăн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ çак колхозсемпе совхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртме йышăннă:

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

6. Государствăн лаша вити (директорĕ М. И. Мельников юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. С. Степанов юлташ).
7. Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ М. Г. Григорьев юлташ, парторганизаци секретарĕ Я. Т. Трофимов юлташ).
8. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. А. Гладков юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. А. Кириллов юлташ).

КУВАКИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ

9. «Новь» колхоз (председателĕ Д. С. Келин юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. И. Филатов юлташ).

ТĂВАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

10. «25-е октября» колхоз (председателĕ П. Л. Ларионов юлташ, парторганизаци секретарĕ И. Я. Ерасов юлташ).

ИШЛЕЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

11. «Большевик» колхоз (председателĕ З. Т. Семенов юлташ, парторганизаци секретарĕ Е. С. Семенов юлташ).

ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

12. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ А. П. Лямасов юлташ).
13. Калинин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ К. И. Игнатьев юлташ, парторганизаци секретарĕ В. М. Максимов юлташ).
14. «Красный флот» колхоз (председателĕ П. Г. Григорьев юлташ, парторганизаци секретарĕ И. А. Гаврилов юлташ).
15. Ильич ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ И. П. Агеносов юлташ).

ЙĔПРЕÇ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

16. «Заря» колхоз (председателĕ Ф. Ф. Асанов юлташ, парторганизаци секретарĕ В. В. Морозов юлташ).

Машинăсемпе ĕçлесе

ЧКАЛОВСКИ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз тырпул пухса кĕртес ĕçре малтанхи кунсенче юлса пыратчĕ. Ытти колхозсем тырпула ытларах машинăсемпе пухса кĕртме тăрăшнине курсан, ку колхозра та машинăсемпе нумайрах усă курасси çинчен ыйту лартрĕç. Уйрăммăнах 3-мĕш бригада (бригадирĕ Г. Филиппов юлташ) машинăсемпе ĕçлесе пысăк утăм турĕ. Вăл жнейкăпа ĕçлеме пултаруллă, техникăна юратакан А. Кувшиновпа И. Янин юлташсене хушрĕ. Вĕсем 4,5 гектар вырăнне 6—7-шер гектар выраççĕ. В. Степановпа А. Дергунов юлташсем те нормăна иртерсе тултарма тытăнчĕç.

Уй-хир ĕçне тухакан колхозниксен хисепĕ те ÿсрĕ. Халĕ уй-хирте куллен 170—180 колхозник ĕçлет. Колхозăн 621 гектар çинчен тĕштырă пухса кĕртмелле пулсан, августăн 20-мĕшĕ тĕлне 470 гектар вырнă. Тырпул пухса кĕртес ĕç хăвăртланнăçемĕн хăвăртланать.

Комбайнер З. Гайнуллин «С-6» комбайнпа 10 гектар вырăнне 25—30-шар гектар вырать. Машинăсемпе пĕлсе ĕçлени колхоза кайри вырăнтан районти колхозсем хушшинче виççĕмĕш вырăна йышăнма май пачĕ.

Колхозра ытти ĕçсем те ăнăçлă пулса пыраççĕ. Государствăна обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана тултарнă, халĕ МТС ĕçĕшĕн натуроплата шучĕпе тырă леçеççĕ.

И. ТАРАСОВ.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

Ÿсет, чечекленет Элĕк

Шупашкартан килекен мăн çул çинчен йывăçсем ăшне путнă суртсем инçетренех курăнса лараççĕ. Ку вăл—Элĕк районĕн центрĕ.

Элĕке Вăрнар, Калинино, Советски районĕсемпе тата республика столиципе Шупашкарпа виçĕ шоссе çулĕ çыхăнтарса тăрать. Çулсене лайăхлатма, кирек мĕнле çанталăкра та, çулла та, хĕлле те машинăсемпе çÿремелле тума ĕçсыннисем хытă тăрăшаççĕ.

Культурăланса ÿссех пырать Элĕк. Кунта юлашки çулсенче çĕнĕ çуртсем нумай туса лартнă. И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан вăтам шкулăн, район Совечĕн, парти райкомĕн, Культура çуртĕн икĕ хутлă çурчĕсем, больницăн, инкубатор станцийĕн, сыхăну кантурĕн пысăк çурчĕсем куçа илĕртеççĕ. Район центрĕнчи рабочисемпе служащисене пурăнма 66 хваттер туса лартнă.

Район центрĕнчи радиоузел таврари Киров ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан, «Правда», «Дружба» колхозсенчи колхозниксен килĕсене Мускав, Шупашкар сассисене çитерет.

Элĕкре пурĕ тăватă библиотека. Вĕсенче кĕнекесен хисепĕ 30 пин ытла шутланать.

Элĕкри вăтам шкулта çулсерен 500—600 ача вĕренет. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче Х-мĕш классенчен 59 çамрăк вĕренсе тухнă, вĕсенчен пĕри — ылтăн, тепри — кĕмĕл медальсем илме тивĕçлĕ пулнă. Вăтам шкултан 1933 çултанпа çĕршер çамрăк вĕренсе тухнă. Вĕсем Тăван çĕршывăн хулисенче, стройкăсенче инженерсем, врачсем, учительсем пулса ĕçлеççĕ, Совет Çарĕн офицерĕсем те нумай.

Ĕлĕк Элĕкре икĕ класлă шкул кăна пулнă. Унта пĕтĕмпе те 50—60 ача çеç вĕреннĕ. Элĕк ялĕнчен вара пурĕ те 4 ача кăна шкула çÿренĕ.

Район центрĕнчи больница кашни çулах сарăлса, кадрсемпе тата оборудованипе пуянланса пырать. Иртнĕ çулсенче кăна çĕнĕ стационар туса пĕтернĕ. Халĕ больницăра 60 койкăллă стационар пур, 7 врач, 18 вăтам специальность илнĕ медицина работникĕ ĕçлет. Кунта амбулатори, куç кабинечĕ, ача çуратмалли уйрăм уçнă. Революциччен Элĕкре больница пулман, фельдшер пунктĕнче пĕр фельдшер тата тăватă койкăллă стационар кăна пулнă. Вĕсем пĕр пĕчĕк çурта вырнаçнă пулнă.

Машина-трактор станцийĕ çулсеренех çĕнĕ техникăпа пуянланать. Халĕ МТС-ра комбайнсем, «ДТ-54» йышши тракторсем, тĕрлĕрен машинăсем нумай. МТС колхозсенчи ялхуçалăх ĕçĕсен 80—85 процентне механизацилет.

Революцичченхи Элĕкре культура çурчĕ, кино çинчен илтмен те. Халĕ культура çуртĕнче 500 çын вырнаçмалăх зал пур. Кăçал культура çурчĕ духовой оркестр валли инструментсем туянчĕ. Кунтах ĕçсыннисем куллен çĕнĕ кинокартинăсем кураççĕ, лекцисемпе докладсем итлеççĕ.

Район центрĕнче суту-илÿ вăйланнă май магазинсемпе ларексем те йышлансах пыраççĕ. Кăçал кăна икĕ магазин тата пĕр ларек уçăлнă. Халĕ кунта сакăр магазин, виçĕ ларек, чайнăй, закусочнăй пур. Магазинсемпе ларексем, 1951 çулхипе танлаштарсан, 12 процент ытларах таварсем сутнă. Кăçал ĕçсыннисем велосипедсем, çĕвĕ машинисем, радиоприемниксем, сехетсем, патефонсем, кĕпе-кумтир, хаклă йышши пусма тавар нумай туяннă.

Район центрĕнчи ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерме атă-пушмак юсамалли, çĕвĕ çĕлемелли мастерскойсем, парикмахерски, коммунальнăй мунча ĕçлет.

Кăçал район центрĕнче çĕнĕ инкубатор станцийĕ туса пĕтерсе ĕçе яни районти колхозсенче чăх-чĕп ĕрчетес ĕçе пысăк пулăшу парать. Иртнĕ çулсенче чăх-чĕп, хур-кăвакал чĕпписене Вăрнартан кÿрсе килнĕ. Ку вăл нумай чăрмав кÿнĕ. Халĕ колхозсем инкубатор станцийĕнчен вуншар пин чăх, хур-кăвакал чĕпписем туянаççĕ.

Çу завочĕ пысăк та çутă çурта вырнаçнă. Вăл кашни çулах Тăван çĕршыва вуншар тонна çу тата ытти продуктсем хатĕрлесе парать.

Район центрĕ лайăхланса пырать. Кунта илемлĕ парк пур. Çав вырăнта 1945 çулта пушă пулнă, нимĕн те ÿсмен. Ун чухне лартнă йывăçсем халĕ лайăх хунаса ÿсеççĕ.

Иртнĕ çулччен район центрĕнче стадион пулман. 1952 çулта çĕнĕ стадион туса пĕтернĕ. Унта çамрăксем волейболла, футболла выляççĕ, спорт ăмăртăвĕсем иртереççĕ.

Район центрĕнчен инçех те мар çамрăк вăрман хĕрринче сĕт-кантăр завочĕн çĕнĕ корпусĕсем ÿсеççĕ. Халĕ строительсем заводăн тĕп корпусне, столовăйпа завод кантурĕн, гараж, механически мастерской çурчĕсене купаласа пĕтернĕ, рабочисемпе служащисене пурăнма стандартлă сакăр çурт лартнă. Электростанци тăваççĕ. Вăл район центрне электричество пама пултарать.

Элĕк хăвăрт ÿссе пысăкланать, аталанать. Çитес çывăх вăхăтрах кунта типовой пекарня пулмалла. Халĕ ун валли хĕрсех строительство материалĕсем турттараççĕ.

Савăнăçлă, хаваслă пурнăçпа пурăнаççĕ Элĕкри ĕçсыннисем. Кашни хваттер, кашни кил, учреждени кантăкĕсенче илемлĕ чечексем, чĕнтĕрленĕ чатăрсем курăнаççĕ. Ĕçсыннисем район центрне тата илемлĕрех, культурăллăрах тăвассишĕн вăй хĕрхенмесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсене çĕнĕ стройкăсенче, цаха çулсем тунă çĕрте курма пулать.

А. МЕШКОВ.
И. ЧИРКОВ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Элĕкри сыхăну уйрăмĕн çурчĕ (сулахайри); И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан шкул. П. ЕФРЕМОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Тырпула хӑвӑртрах пуҫтарса кӗртер, государствӑна тырӑ памалли обязательствӑна срокчен пурнӑҫлар!

Государствӑна — тырӑ

МУРКАШ. Районти колхоз ӗҫченӗсем, СССР Верховнӑй Совечӗн V-мӗш сессийӗн решенийӗсемпе тата СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ сессире тухса каланӑ сӑмахпа хавхаланса, Тӑван ҫӗршыв умӗнчи чи пирвайхи тивӗҫе — государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарассишӗн ырик-каныш тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарассишӗн пыракан ӑмӑртура «Красное Сормово», Сталин ячӗпе тӑракан тата «Аврора» ялхуҫалӑх артелӗсен членӗсем мала тухрӗҫ. Вӗсем хӑйсен панӑ сӑмаха чыслӑн пурнӑҫларӗҫ, государствӑна тырӑ чи маттур парса татрӗҫ. Халӗ асӑннӑ колхозсем МТС ӗҫленӗшӗн памалли натуроплата тыррине аванс шучӗпе параҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех Энгельс ячӗпе тӑракан тата «Герой» колхозсем те государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе ӑнӑҫлӑ ӗҫлеҫҫӗ.

П. ПАВЛОВ.

* * *

ИШЛЕЙ. «Большевик» колхоз государствӑна тырӑ памалли плана августӑн 19-мӗшӗнче тултарчӗ. Халӗ колхоз МТС ӗҫӗсемшӗн натуроплата шучӗпе тырӑ леҫет.

Государствӑна тырӑ срокчен парса татас тесе колхоз шоферӗ И. Тимофеев автомашинӑпа хатӗрлев пунктне куллен 3—4 рейс туса тӑчӗ. Авӑн ҫапнӑ ҫӗрте те колхозниксем машинӑсемпе анлӑн усӑ кураҫҫӗ, вӗсем колхозӑн электростанцийӗ паракан электричество вӑйӗпе ӗҫлеҫҫӗ.

Колхоз килес ҫулхи пысӑк тухӑҫлӑ тырпулшӑн тимлӗн кӗрешет. Кӗрхи тырӑсене августӑн 20-мӗшӗ тӗлне акса пӗтерчӗ. Тырӑсене пӗтӗмпех трактор тата лашапа ӗҫлекен сеялкӑсемпе агротехника кӑтартӑвӗсене пӑсмасӑр акнӑ.

Колхозниксем уйри ӗҫсене тунипе пӗрлех хуҫалӑхри ытти ӗҫсене те туса пыраҫҫӗ. Строительство бригадинче 26 ҫын ӗҫлет. Халӗ бригада силос хывмалли полубашня туса пӗтерчӗ. Ӗнесем валли вите тума тытӑнчӗҫ.

Колхоз силос хывмалли плана та иртерсе тултарнӑ.

Ӗҫри ҫӗкленӳ массӑлла-политикӑлла ӗҫе лайӑх йӗркеленинчен килчӗ. Вулав ҫурчӗ культурӑлла-массӑллӑ ӗҫе малтанхи кунсенчех хире куҫарчӗ. Пуҫламӑш парторганизаци тӑрӑшнипе СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн решенийӗсем ҫинчен тата сессире СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ каланӑ сӑмаха колхозниксене вӑхӑтра ӑнлантарса панӑ.

Д. ГРИГОРЬЕВ.

ГОСУДАРСТВӐНА — ЯЛХУҪАЛӐХ ПРОДУКЧӖСЕМ

КУСЛАВККА. Партипе правительство ялхуҫалӑхне малалла вӑйлатассишӗн тӑрӑшни ҫине ответлесе, районти колхозсем хӑйсен государство умӗнчи обязательствисене срокчен пурнӑҫлама тӑрӑшаҫҫӗ. «Динамо» колхоз кӑҫал государствӑна сӗт-ҫу памалли плана июль уйӑхӗнчех тултарнӑ, килес ҫулшӑн 5.600 литр сӗт панӑ. «Правда», «Коммунар» тата «Большевик» ялхуҫалӑх артелӗсем 1953 ҫулшӑн ҫӑмарта памалли обязательствӑна пурнӑҫланӑ. «Коммунар» колхоз 1954 ҫулшӑн 3.200 ҫӑмарта панӑ.

(Хамӑр инф.).

* * *

Комбайнерсен ӑмӑртӑвӗ

Тырпул пухса кӗртес ӗҫре малта пыракансем

(августӑн 20-мӗшӗ тӗлне)

Йышӑннӑ вырӑн	Комбайнерсен хушамачӗсем	МТС-сем	Тырпул пухса кӗртнӗ (гектарпа)
	«С-6» комбайнпа		
1.	И. Шарбинов	Етӗрне	424
2.	М. Куклев	Сурмайдан	400
3.	А. Анисимов	Пӑрачкав	360
4.	Н. Столяров	—»—	340
5.	А. Сатушкин	Сурмайдан	340
6.	Н. Горшков	—»—	335
7.	С. Горбунов	Етӗрне	335
8.	Н. Архипов	Канаш	335
9.	А. Ванюхин	Сурмайдан	330
10.	М. Наумов	Пӑрачкав	321
	«С-4» комбайнпа		
1.	В. Петров	Ҫӗрпӳ	357
2.	С. Ермолаев	Шӑхасан	340
3.	А. Иванов	Куславкка	330
4.	М. Артемьев	Ҫӗрпӳ	317
5.	Н. Петров	Элӗк	310
6.	И. Портнов	Ҫӗрпӳ	301
7.	Г. Александров	Куславкка	300
8.	И. Орлов	—»—	300
9.	В. Кудряшов	Хӗрлӗ Чутай	300
10.	М. Иванов	Йӗпреҫ	300
11.	Я. Васильев	Чурачӑк	290
12.	П. Гусев	Йӗпреҫ	290
13.	И. Павлов	Элӗк	289
14.	А. Курин	Елчӗк	289
15.	К. Алексеев	Шӑхасан	283
16.	М. Бородов	Шупашкар	282
17.	И. Папаев	Улатӑр	282
	«Коммунар» комбайнпа		
1.	Г. Иванов	Йӗпреҫ	301
2.	А. Хураськин	—»—	300
3.	Г. Тюкин	Ҫӗмӗрле	285
4.	И. Яруткин	Ишлей	280
5.	В. Чернов	Елчӗк	280
6.	Г. Федоров	Етӗрне	233
7.	А. Иванов	Йӗпреҫ	220
8.	Т. Селиванов	Канаш	210
9.	Г. Васильев	Ишлей	210
10.	П. Стеклов	Шӑхасан	209
11.	С. Чекменев	Ҫӗмӗрле	205
12.	И. Карпов	Красноармейски	205
13.	С. Медведев	Ҫӗмӗрле	202
14.	Н. Иванов	Йӗпреҫ	200
15.	А. Макаров	—»—	200

Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗ районти колхозсене машинӑсемпе тырӑ пухса кӗртме, авӑн ҫапма пулӑшать. МТС машинисчӗ И. В. Морозов, «МС-1100» молотилкӑпа ӗҫлесе, августӑн 20-мӗшӗ тӗлне 240 тонна тырӑ ҫапнӑ, ҫулталӑк планне 53 процент тултарнӑ. Вӑл кӑҫал 1.000 тонна тырӑ ҫапма обязательство илнӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: ВКП(б) ячӗпе тӑракан колхоз итемӗнче И. В. Морозов ӗҫлекен «МС-1100» молотилкӑпа авӑн ҫапаҫҫӗ. Сӳлти ҫаврашкара — И. В. Морозов.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Сесси решенийӗсемпе хавхаланса

ВАРНАР. Кольцовкӑри Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхозӑн уй-хир бригадисенче, выльӑх-чӗрлӗх фермисенче СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗнче каланӑ сӑмаха тата сесси решенийӗсене вӗрентессине лайӑх йӗркеленӗ.

Бригадӑсен пухӑвӗсенче колхоз председателӗ СССР Верховнӑй Совет депутачӗ С. Воротков юлташ сесси ӗҫӗсем ҫинчен каласа пачӗ. Агитаторсем те колхозниксем каннӑ вӑхӑтра сесси материалӗсем тӑрӑх каласусем ирттереҫҫӗ.

Ленин орденлӗ ялхуҫалӑх артелӗн членӗсемпе Социализмла Ӗҫ Геройӗ И. Пронькин юлташ ертсе пыракан бригадӑри механизаторсем тата ялти интеллигенци Совет Союзӗн мирлӗ политикине, партипе правительство халӑх хуҫалӑхне, вӑл шутра ялхуҫалӑхне малалла аталантарма, ӗҫсыннисен пурнӑҫ шайне ӳстерме тӑрӑшнине чӗререн ырлаҫҫӗ.

— Кӑҫалхи бюджетра, — терӗ иккӗмӗш уй-хир бригадир помощникӗ Социализмла Ӗҫ Геройӗ Василий Даниилович Ашанин юлташ пухура, — Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви колхозсен общественла хуҫалӑхне тата колхозниксен пурнӑҫ шайне ӳстерессишӗн тӑрӑшни палӑрса тӑрать. Ялхуҫалӑх налогӗ ҫинчен кӑларнӑ ҫӗнӗ закон ял ӗҫченӗсен пурнӑҫне лайӑхлатать. Эпир, колхозниксем, СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн решенийӗсемпе хавхаланса, ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫласа пырӑпӑр. Вӑйлӑ тырпула пӗр тӑкаксӑр пуҫтарса кӗртетпӗр. Ҫӗрулмине выльӑх кӑшманне вӑхӑтра кӑларатпӑр, ҫапла вара общественла выльӑх-чӗрлӗх валли хӗл каҫиччен ҫитерме лайӑх пысӑк пахалӑхлӑ апат хатӗрлетпӗр.

Сесси решенийӗсем тата Г. М. Маленков юлташ сӑмахӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантараҫҫӗ. Колхозри ӗне фермин заведующийӗ Социализмла Ӗҫ Геройӗ Александр Федорович Доманин юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче ҫапла калярӗ:

— Чӑваш республикинчи колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе саралнӑ ӑмӑртура пирӗн колхоз малта пыракансенчен пӗри шутланать. Ҫапах та кашни ӗнерен вӑтам шутпа 2.500 литр сӗт суса илни пирӗншӗн сахал, пире вӑл тивӗҫтерме пултараймасть. Партипе правительство ялхуҫалӑхӗ умне лартнӑ задачӑсене асра тытса, кашни ӗнерен ҫулталӑкра 3.200—3.500 литр сӗт суса илессишӗн тӑрӑшатпӑр.

Кольцовкӑри колхозниксем сӑмахӗ ӗҫпе ҫирӗплетеҫҫӗ. Тырпула тӑкаксӑр пуҫтарса кӗртес тесе пур майсемпе те усӑ кураҫҫӗ. Вырнӑ тырра вӑхӑтра капана хываҫҫӗ. Турттарнӑ чухне урапасем ҫине шӑналӑксем сараҫҫӗ. Пучахсене тирпейлӗ пуҫтараҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗх валли апат хатӗрлекенсем 2 башня силос хывса тултарнӑ.

Пухусенче, каласусенче колхозниксем промышленность валли чӗртавар тата апат-ҫимӗҫ ытларах туса хатӗрлеме паха сӗнӳсем параҫҫӗ.

Н. ЛЕОНИДОВ.

ФЕЛЬЕТОН

Кам кама улталать?

[illegible] МТС-ӗн [illegible] Ракчеев юлташ «Сталинцы» [illegible] икӗ эрне ытларах ӗҫлесе, [illegible] тулӑ, [illegible] урпа тата костер [illegible] пухса кӗртнӗ. Ҫав комбайнер пурӗ миҫе гектӑр ҫинчен тата кашни культурӑна гектар пуҫне вӑтамран миҫе центнер ҫапса панине шутласа пӗлес пулать.

Арифметикӑн тӑватӑ действине пӗлекен ҫыншӑн ку задача йывӑр мар, темелле.

Уй-хир бригадирӗсем, трактор бригадин учетчикӗпе пӗрле, комбайн вырса ҫапнӑ участоксен тӑршшӗпе урлӑшне метрпа виҫсе тухаҫҫӗ те, ҫав цифрӑсене пӗр-пӗрин ҫине хутлаҫҫӗ, унтан 10 пин тӑваткал метр ҫине пайласа миҫе гектар пулнине пӗлеҫҫӗ.

Трактор бригадин тата колхозӑн весовщикӗсем, комбайн бункерӗнчен турттарса пынӑ мӗнпур тырра виҫсе пӗтернӗ хыҫҫӑн, пӗтӗмӗшле цифра комбайн вырса пухнӑ участок ҫинчи гектарсен шучӗ ҫине пайласа, тырӑ гектар пуҫне миҫе центнер тухнине шутласа параҫҫӗ.

Юлашкинчен вара, комбайнер мӗн чухлӗ ӗҫ тунине шутласа акт ҫыраҫҫӗ те, колхоз правленийӗпе МТС дирекцине параҫҫӗ. Ӑнланмалла марри нимӗн те ҫук пек. Ҫапла ӗнтӗ, Ракчеев комбайнер «Сталинцы» колхоза кӑҫал миҫе гектар ҫинчен тата мӗн чухлӗ тырӑ вырса, ҫапса панӑ?

— Пирӗн алӑра шӑп тӗрӗс даннӑйсем пур, — терӗҫ МТС бухгалтерийӗнче. — Ракчеев юлташ «Сталинцы» колхоза августӑн 10-мӗшӗ тӗлне пурӗ 111 гектар ҫинчи тырпула вырса ҫапса панӑ, вӑл шутра ыраш — 32, сӗлӗ — 65, урпа — 8 гектар.

Чӑн та, ӗненмелле. Комбайнер ҫавӑн чухлӗ ӗҫ туни ҫинчен ҫырнӑ икӗ акт ҫине те «Сталинцы» колхоз председателӗ А. Сергеев, трактор бригадин бригадирӗ Т. Степанов, уй-хир бригадин бригадирӗсем Павловпа Григорьев юлташсем алӑ пуснӑ тата колхозпа МТС пичечӗсене те чернилпа йӗпетсех пусса хунӑ.

— Пирӗн алӑра официальнӑй сведенисем пур, — терӗҫ районти ялхуҫалӑхпа хатӗрлев управленийӗнче. — «Сталинцы» колхозра комбайнпа августӑн 10-мӗшӗ тӗлне 70 гектар, августӑн 15-мӗшӗ тӗлне 115 гектар ҫинчи тырпула пухса кӗртнӗ.

Каллех ӗненмелле. Колхозран кашни 5 кунтан пӗрре ярса паракан сведенисем ҫине правлени председателӗ А. Сергеев юлташ хӑйӗн аллипе хӗех алӑ пуснӑ.

Ракчеев юлташ августӑн 15-мӗшӗнче «Сталинцы» колхозран «Красный Октябрь» колхозӑн сӗлӗ пуссине куҫнӑ.

— Хамӑн ӗҫе хам пӗлетӗп ӗнтӗ, — терӗ вӑл. — Августӑн 11-мӗшӗ тӗлне 111 гектӑр ҫинчи тырӑсене вырса ҫапрӑм, ун хыҫҫӑн тата 30 гектар ҫинчи сӗлле пухса кӗртрӗм. Ну, вот, пурӗ 141 гектар пухӑнать те. Тырри мӗн чухлӗ тухнине ҫеҫ пӗлместӗп.

Комбайнер сӑмахне те ӗненмесӗр тӑма ҫук. 111 гектар ҫинчи тырпула вырса ҫапса панине актпа йышӑннӑ, ун хыҫҫӑн вырса пухнӑ 30 гектарӗ ниҫта та ҫухалмӗ.

— Хамӑр колхозра тырпул пухса кӗртес ӗҫ мӗнле пынине, епле тесен те, лайӑх пӗлетпӗр ӗнтӗ, — терӗ колхоз председателӗ А. Сергеев юлташ. — Комбайнер мӗнле ӗҫленипе интересленетӗр пулсан, пӗлтерме пултаратӑп. Ракчеев юлташ пире кӑҫал пурӗ 81 гектар ҫинчи тырпула вырса ҫапса пачӗ.

Пӗр кун [illegible] 4 [illegible] 7 тӗрлӗ цифрӑсем [illegible] тивр[illegible] 111, 115, 141, юла[illegible]чен — 81 гектар. [illegible] тӗ[illegible]с? Кам [illegible] улталать?

Сергеев тата трактор бригадин бригадирӗ Степанов юлташсене колхозра тырпул пухса кӗртес ӗҫе, вӑл шутра комбайн мӗнле ӗҫленине пӗлменшӗн айӑплама ҫук. Ӑна вӗсем лайӑх пӗлеҫҫӗ. Ӗҫ урӑхлачче. Сергеевпа Степанов юлташсем районти колхозсемпе трактор бригадисенче ӗҫ мӗнле пынине сводкӑсем тӑрӑх ҫеҫ пӗлекен ҫынсен тимсӗрлӗхӗпе усӑ курма шутланӑ.

Комбайнпа мӗн чухлӗ ӗҫ тунине кӑтартакан цифрӑсене илсе пӑхӑпӑр.

Августӑн 5-мӗшӗнче ҫырнӑ 25-мӗш номерлӗ актра кӑтартнӑ тӑрӑх, комбайн 32 гектар ҫинчен пурӗ 196 центнер ыраш вырса ҫапса панӑ. Урӑхла каласан, кашни гектар пуҫне 6,10 центнер тухнӑ мӗн.

«Сталинцы» колхозра кӑҫал, кирек хӑш колхозникран ыйтсан та, пурте савӑнса пӗлтереҫҫӗ: ыраш тухӑҫӗ гектар пуҫне 16 центнера ҫитет. МТС-ри руководительсем «Сталинцы» колхозра ыраш гектар пуҫне 36 пӑт тухать, тесе ӗнентересшӗн. Ӗненмесен 25-мӗш номерлӗ акт ҫине пӑхма сӗнеҫҫӗ.

Ыраш тухӑҫне ун чухлӗ те пулин кӑтартнӑ-ха. Августӑн 10-мӗшӗччен 16 гектар ҫинче комбайнпа кӗрхи тулӑ вырса ҫапнине нихӑш актра та кӑтартман. Калӑн, 16 гектар ҫинчи тулӑ, ҫӑрттан пулӑ вӑйӗпе вырӑнса-ҫапӑнса, колхоз кӗлетне пырса кӗнӗ, тейӗн. Комбайн тулӑ вырса ҫапнӑ, Сергеевпа Степанов юлташсем акт ҫине «сӗлӗ» тесе ҫырса хунӑ-мӗн, ку вӑл Сергеев юлташа комбайнпа тулӑ вырса ҫапса панӑшӑн натуроплата сӗлӗпе тӳлеме кирлӗ.

— Аҫта Ракчеев комбайнер? Мӗншӗн унӑн сасси илтӗнмест?

Мӗншӗн тесен, ӑна, кӑҫал пирвайхи хут комбайн ҫине ларнӑскере, сӑмах та памаҫҫӗ; хӑйӗн ӗҫӗ мӗнле пынине те пӗлтермеҫҫӗ. Вӑл хӑй вырса ҫапнӑ участоксенче уйрӑм культурӑсен тухӑҫӗ мӗн чухлӗ пулнине те пӗлмест.

Музыка искусствинче икӗ ҫын юнашар тӑрса икӗ сасӑпа пӗр юрӑ юрланине е музыка инструменчӗсемпе вылянине дует, теҫҫӗ. «Сталинцы» колхоз председателӗ А. Сергеев тата трактор бригадин бригадирӗ Т. Степанов юлташсем те, иккӗшӗ икӗ сасӑпа, анчах пӗр юрра ӗнерме шутланӑ.

Юрри илемсӗр тата сиенлӗ. Ӑна итлесен ку ҫынсем, государство интересӗсем ҫинчен манса, хӑйсен интересӗсене кӑна тивӗҫтерме хӑтланни уҫҫӑнах курӑнать.

Степанов юлташа комбайн нумайрах гектар ҫинче тырӑ вырса пухнине кӑтартни кирлӗ, ун пек тусан трактор бригадинче бензинпа крассын перерасходне процент ӳсет. Ыраша чӑнӑнпе 12,4 гектар ҫинчен пухса кӗртнӗ, акт ҫине «32» тесе лартнӑ. Сӗлле 39 гектар ҫинчен вырса ҫапнӑ, акт ҫинче кӑтартнӑ тӑрӑх 65 гектар пулать.

Сергеев юлташа гектарсен шучӗ питтех интереслентермест иккен, уншӑн комбайн вырса ҫапнӑ тырӑ виҫи ҫеҫ сахал курӑнтӑр, ӑна май натуроплата та сахалтарах тӳлемелле пултӑр.

Ҫак йӑнӑш сасӑпа ӗнерлекен дуэта хӑлхана усса итлекенсем те пур. Вӗсем — МТС дирекцийӗнче ӗҫлекенсем.

Н. ВОЛКОВ.

Шкулти пуҫламӑш парторганизаци

Коммунистсен партийӗ, унӑн Центральнӑй Комитечӗ совет обществин культура шайне малалла ӳстерессишӗн, халӑха вӗрентес ӗҫе вӑйлатассишӗн, шкулти ӗҫсен пахалӑхне хӑпартассишӗн куллен тӑрӑшаҫҫӗ. Шкулти вӗренӳпе воспитани ӗҫӗн пахалӑхне хӑпартас тӗлӗшпе пуҫламӑш парторганизацисем пысӑк вырӑнта тӑраҫҫӗ.

Юлашки ҫулсенче республикӑри шкулсенчи пуҫламӑш парторганизацисен йышӗ нумай ӳсрӗ тата вӗсем организаци енӗпе чылай ҫирӗпленчӗҫ. Ҫак виҫӗ ҫул хушшинче шкулсенче ҫӗнӗрен 116 пуҫламӑш парторганизаци тунӑ, вӗсем икӗ пин ытларах коммуниста пӗрлештерсе тӑраҫҫӗ.

Пуҫламӑш парторганизацисенчен чылайӑшӗ шкулти вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗн пахалӑхне, унӑн идейӑлла-политикӑлла шайне ӳстерсе пырассишӗн ҫине тӑрса кӗрешеҫҫӗ.

Шкулсенчи пуҫламӑш парторганизацисен отчетпа суйлав пухӑвӗсем учительсен хушшинче идеологилле ӗҫ, политикӑлла-массӑлла тата организацилле ӗҫ нумай вӑйланнине кӑтартса параҫҫӗ. Сӑмахран, Шупашкарти 5-мӗш вӑтам шкулти пуҫламӑш парторганизаци (секретарӗ А. Гусева юлташ) хӑйӗн пӗтӗм ӗҫне шкул умӗнче тӑракан тӗп задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗллевпе пӑхӑнтарса туса пырать, ҫавна май шкул ӗҫӗ лайӑхланнӑ. Пуҫламӑш парторганизаци шкулти учительсен тата вӗренекен ачасен комсомол организацийӗсене, профсоюзӑн вырӑнти комитетне куллен ертсе пырать, профсоюз тата комсомол организацийӗсен активне политикӑлла-организацилле ӗҫсене хутшӑнтарать.

Парторганизаци вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗн мӗнпур енӗсене тишкерсе пырать, шкул дирекцине вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗн пахалӑхне хӑпартма тимлӗн пулӑшать. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче вӑл, комсомолецсемпе партире тӑман учительсемпе пӗрле, шкулта историе тата математикӑна вӗрентес ӗҫ мӗнле пынине тӗпченӗ, ҫав ыйтӑва парторганизаци пухӑвӗнче сӳтсе явнӑ, шкул дирекцийӗпе пӗрле историпе математикӑна вӗрентес ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ ӗҫсем туса ирттернӗ. Парторганизаци пулӑшнипе историе тата математикӑна вӗрентес ӗҫ шкулта чылай лайӑхланнӑ.

Ку шкулти парторганизаци кашни коммунистӑн, комсомолецӑн ӗҫне тӑтӑшах тӗрӗслесе пырать, вӗсене ӗҫре вӑхӑтра пулӑшу парать. Парторганизаци секретарӗ А. Гусева юлташ шкул директорӗпе пӗрле учительсен урокӗсенче час-часах пулать. Пуҫламӑш парторганизаци коммунистсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене вӑхӑтра палӑртса сирсе пыма тӑрӑшать. Сӑмахран, парти членӗн кандидачӗ С. Жукова учительница вӗрентӳпе воспитани ӗҫне тата парторганизаци хушнӑ ӗҫсене тимлӗн туса пыманни палӑрнӑ. Вӑл урокӗсене тӗплӗн хатӗрленмесӗр ирттернӗ. Парторганизаци секретарӗ Жуковӑпа унӑн ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем ҫинчен калаҫнӑ, ун ҫинчен парторганизаци пухӑвӗнче сӳтсе явнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн Жукова юлташ хӑйӗн ӗҫне чылай лайӑхлатнӑ.

Пуҫламӑш парторганизаци коммунистсен пухӑвӗсене вӑхӑтра ирттерет, пухусенче коммунистсем ӗҫри ҫитменлӗхсене хӑюллӑн критиклеҫҫӗ, шкул тата учительсен ӗҫӗнчи йӗркесӗрлӗхсене пытарса тӑмаҫҫӗ. Парторганизацин кашни пухӑвӗнче парторганизаци секретарӗ коммунистсене иртнӗ пухура йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлас тӗлӗшпе туса ирттернӗ ӗҫсем ҫинчен каласа кӑтартать. Парторганизаци час-часах уҫӑ пухусем ирттерет, ҫав пухусене ирттерес ӗҫе партире тӑман учительсемпе комсомолецсем активлӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Парторганизаци коммунистсемпе мӗнпур учительсен идейӑлла-политикӑлла пӗлӗвӗсене ӳстерес тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлет. Вӑл марксистла-ленинла теорие харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренсе пыракан учительсене вӗренӳре пулӑшу парать.

Пуҫламӑш парторганизаци хӑйӗн партилле-политикӑлла тата организацилле ӗҫне тимлӗн туса пыни, шкул дирекцине, учительсене ӗҫре кунсерен пулӑшса пыни шкулӑн пӗтӗм ӗҫне лайӑхлатма май пачӗ. Иртнӗ вӗренӳ ҫулне шкул ӑнӑҫлӑ вӗҫлерӗ. Вӗрентӳ пахалӑхӗпе Шупашкарти 5-мӗш вӑтам шкул малти вырӑна тухрӗ. Шкулти 8 учителӗн вӗренӳре ӗлкӗрсе пырайман пӗр ача та ҫук. Шкул хӑйӗн территорийӗнче шкул ҫулне ҫитнӗ пур ачасене те вӗренӗве явӑҫтарнӑ.

Шкулти партилле-политикӑлла тата организацилле ӗҫе ҫавӑн пекех Тивӗшри (Муркаш районӗ), Кувакинӑри, Вӑрмарти, Сӗнтӗрвӑрринчи вӑтам шкулсенчи пуҫламӑш парторганизацисем ӑнӑҫлӑ туса пыраҫҫӗ. Ҫак пуҫламӑш парторганизацисем вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатас, вӗрентӳ ӗҫӗн идейӑлла-политикӑлла шайне ӳстерес енӗпе, учительсен ӑсталӑхне, идейӑлла-политикӑлла пӗлӗвӗсене ӳстерсе пырас тӗлӗшпе ӑнӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах шкулсенчи пуҫламӑш парторганизацисен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Уйрӑм пуҫламӑш парторганизацисем партилле-политикӑлла тата организацилле ӗҫе шкул умӗнче, учительсемпе вӗренекенсем умӗнче тӑракан тӗп задачӑсемпе таччӑн ҫыхӑнтарса туса пымаҫҫӗ, шкул дирекцине ӗҫре тивӗҫлӗ пулӑшу парса тӑмаҫҫӗ, шкул ӗҫӗнчи, уйрӑм коммунистсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене палӑртса, вӗсене пӗтерес тӗлӗшпе сахал ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавна пула пуҫламӑш парторганизаци ӗҫӗ хӑй тӗллӗн, шкул ӗҫӗ хӑй тӗллӗн пулса пырать.

Тӗслӗхрен, Мӑн Чурашри (Советски районӗ) вӑтам шкулти пуҫламӑш парторганизацин ӗҫне илсе пӑхар. Ку пуҫламӑш парторганизацире 6 коммунист. Кунсӑр пуҫне шкулта комсомол организацийӗ пур, вӑл 74 комсомолецпа пӗрлештерсе тӑрать. Партипе комсомол пуҫламӑш организацийӗсем хӑйсен ӗҫне тимлӗн, шкул умӗнче тӑракан задачӑсене пӑхӑнтарса туса пырас пулсан, шкул ӗҫӗ ӑнӑҫлӑн пулса пымалла. Анчах, пуҫламӑш парторганизаци (секретарӗ Т. Федорова юлташ) шкулта партилле-политикӑлла ӗҫе ҫителӗксӗр туса пырать, вӑл коммунистсене тата учительсен пӗтӗм коллективне вӗрентӳ пахалӑхне хӑпартас ӗҫе мобилизацилесе пымасть, коммунистсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене сирме тӑрӑшмасть, учительсен марксистла-ленинла вӗренӗвне тивӗҫлӗн организацилемест, коммунистсемпе комсомолецсене тата партире тӑман учительсене идейӑлла-политикӑлла воспитани парас енӗпе сахал ӗҫлет. Парторганизаци коммунистсен ӗҫри ответлӑхне хӑпартас енӗпе начар ӗҫленӗ пирки коммунист-учительсем хӑйсен ӗҫне ҫителӗклӗ туса пымаҫҫӗ. Сӑмахран, вырӑс чӗлхине вӗрентекен В. Борисовӑн 111 вӗренекенрен 40 ача вӗренӳре ӗлкӗрсе пыраймасть, чӑваш чӗлхине вӗрентекен Г. Ивановӑн 149 вӗренекенрен вӗренӳре ӗлкӗрсе пырайманнисем 33 ача шутланаҫҫӗ. Мӑн Чураш шкулӗнче иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче вӗреннӗ ачасенчен 37 проценчӗ вӗренӳре ӗлкӗрсе пырайман.

Парторганизаци пухӑвӗсем кунта сайра хутра пулса иртеҫҫӗ, вӗсенче коммунистсен активлӑхӗ ҫителӗксӗр. Сӑмахран, 1953 ҫулти февраль, апрель, июнь уйӑхӗсенче парторганизаци секретарӗ Федорова юлташ пӗр пуху та ирттермен. Пухусенче шкул директорӗпе вӗрентӳ пайӗн заведующийӗсӗр пуҫне ытти коммунистсем сахал тухса калаҫаҫҫӗ. Коммунистсем пухусенче критикӑпа самокритикӑна сарма тӑрӑшмаҫҫӗ, пӗр-пӗрин ҫитменлӗхӗсене критиклемеҫҫӗ. Пухусенче йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлас ӗҫ мӗнле пынине парторганизаци тӗрӗслемест, ҫавӑнпа вӗсенчен чылайӑшӗ пурнӑҫланмаҫҫӗ.

Ҫакӑн йышши ҫитменлӗхсем ытти хӑш-пӗр пуҫламӑш парторганизацисен ӗҫӗнче те пур. Шкулсенчи пуҫламӑш парторганизацисен ӗҫне тӗпренех лайӑхлатни кирлӗ. Шкулсенчи парторганизацисен партилле-политикӑлла тата организацилле ӗҫе тӗрӗс те тимлӗн туса пынипе шкул дирекцине, учительсене вӗренекенсен коллективне вӗренӳ пахалӑхне хӑпартса пыма, вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерсе пыма тивӗҫлипе пулӑшмалла. Пуҫламӑш организацисем туса пыракан пӗтӗм ӗҫсем шкул умӗнче тӑракан пысӑк задачӑсене пӑхӑнса тӑмалла.

Кашни пуҫламӑш парторганизацин ӗҫӗн пахалӑхне шкул ӗҫӗнчи ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене хисепе илсе хакламалла. Шкулти партилле-политикӑлла ӗҫ витӗмлӗ пулмалла, вӑл шкулӑн пӗтӗм ӗҫне лайӑхлатас задачӑна пурнӑҫлама пулӑшмалла.

Шкулти пуҫламӑш парторганизацисен нимрен малтан идеологилле ӗҫе анлӑн сармалла. Идеологилле ӗҫ партин чи пысӑк обязанноҫӗ пулса тӑрать, ку ӗҫе хакламанни партипе государство интересӗсене питех те пысӑк сиен кӳме пултарать, — терӗ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мӗш съездӗнче. — Социализмла идеологи влиянийӗ вӑйсӑрланни ялан буржуаллӑ идеологи влиянийӗ вӑйланнине пӗлтерет, — ҫакна пирӗн кирек хӑҫан та асра тытас пулать.

Шкулсенчи пуҫламӑш парторганизацисен коммунистсемпе партире тӑман учительсен идейӑлла шайне ӳстерес тӗлӗшпе ялан ӗҫлемелле, вӗсене марксизм-ленинизма вӗрентмелле. Учительсенчен чылайӑшӗ марксизм-ленинизм теорине харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренеҫҫӗ. Анчах хӑш-пӗр пуҫламӑш парторганизацисем харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренекенсен ӗҫне тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ тата вӗсене вӗренӳре тивӗҫлӗ пулӑшу памаҫҫӗ. Уйрӑм пуҫламӑш парторганизацисем коммунистсемпе партире тӑман учительсем марксизм-ленинизма начетникла, догматикла вӗреннипе, уйрӑм формулӑсемпе цитатӑсене кӑна ӑнланса илнипе килӗшсе тӑраҫҫӗ, марксистла-ленинла вӗренӗвӗн витӗмлӗхӗшӗн тӑрӑшмаҫҫӗ. Марксизм-ленинизма начетникла вӗреннине пула хӑш-пӗр коммунист-учительсем шкул ӗҫӗнче ытти учительсемшӗн пример пулса тӑмаҫҫӗ. Марксизм-ленинизма тимлӗн вӗренни, Маркс — Энгельс — Ленин — Сталинӑн пурне те ҫӗнтерекен теорийӗн тӗп шухӑшне тарӑннӑн ӑнланса илни кӑна учителе ҫамрӑк ӑрӑва тӗрӗс воспитани пама вӑй-хӑват парать. Парти вӗренӗвӗн ҫӗнӗ ҫулӗнче шкулсенчи парторганизацисен партилле пропагандӑна лайӑхлатмалла, ку ӗҫре иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнчи пулнӑ ҫитменлӗхсене пӗтермелле.

Шкулсенчи пуҫламӑш парторганизацисенчен чылайӑшӗнче критикӑпа самокритика тивӗҫлӗ вырӑнта тӑмасть. Парторганизаци секретарӗсем нумай чухне критикӑпа самокритикӑна сарас ӗҫе хакламаҫҫӗ, критикӑна анлӑн сарас вырӑнне ӑна хӗсме пӑхаҫҫӗ. Сӑмахран, Пӑрачкаври вӑтам шкулта вӗренекен, ВЛКСМ членӗ «Комсомольская правда» хаҫата вӗренекенсем хушшинче юлташлӑхпа туслӑх ҫукки ҫинчен, ку тӗлӗшпе шкулти комсомол организацийӗ ӗҫлеменни ҫинчен заметка ҫырса янӑ. Заметкӑна сӳтсе явма пуҫтарӑннӑ комсомол пухӑвӗнче шкулти парторганизаци секретарӗ В. Грибанов юлташ, вӗренекенсене заметкӑра кӑтартса панӑ ҫитменлӗхсене пӗтерме мобилизацилес вырӑнне, заметка авторне хирӗҫ тухса каланӑ, «заметка тӗрӗс мар» тесе «Комсомольская правда» хаҫат редакцине ҫыру ҫырса яма сӗннӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн хӑш-пӗр вӗренекенсем заметка авторне тивӗҫҫӗрех хӗсме, унтан тӑрӑхлама тытӑннӑ.

Критикӑна хӗснине, ӑна хакламаннине хирӗҫ пуҫламӑш парторганизацисен ҫине тӑрса кӗрешмелле.

Шкулти пуҫламӑш парторганизацисем, предприяти е колхозри парторганизацисемпе танлаштарсан, урӑхларах условисенче ӗҫлеҫҫӗ, вӗсен шкул администрацийӗн ӗҫне тӗрӗслесе тӑмалли право ҫук. Анчах контроль прави ҫукки парторганизацин дирекци ӗҫӗнче тӗл пулакан ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшсенчен пӑрӑнса тӑмаллине пӗлтермест.

Шкулсенчи парторганизацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерессе парти райкомӗсемпе хула комитечӗсем ертсе пынинчен нумай килет. Парти райкомӗсемпе хула комитечӗсен шкулсенчи парторганизацисен ӗҫне тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла, вӗсен ӗҫӗнче палӑракан ҫитменлӗхсене пӗтермелле, вӑхӑтра тивӗҫлӗ пулӑшу памалла. Парторганизацисен секретарӗсемпе ялан ӗҫлемелле, вӗсен политикӑлла пӗлӳлӗхне ӳстермелле.

Партин XIX-мӗш съезчӗ шкулсем умне пысӑк та ответлӑ задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. Шкулсенчи парторганизацисен ҫав задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе коммунистсене, комсомолецсене, мӗнпур учительсене мобилизацилесе пымалла.

А. ОТАЧКИН.

Халăхсен туслăхĕ—нумай нациллĕ Совет государствин тĕп никĕсĕ

Совет Союзĕ—нумай нациллĕ социализмлă государство. ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла çемйинче тĕрлĕ нацисемпе халăхсем 60 ытла шутланаççĕ. Коммунизмла шухăш-ĕмĕтсем Совет çĕршывĕнчи мĕнпур ĕçсыннисене пĕрлештерсе тăраççĕ. Вĕсем—тĕрлĕ раса е наци çыннисем—пĕр çемьене пĕрлешнĕ. Вĕсем совет обществине ертсе пыракан Коммунистсен партийĕн политикине, ĕçсыннисен пурнăçри интересĕсене палăртса тăракан политикăна пĕтĕм чĕререн ырлаççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ çĕршывăн шалти ĕçĕсем енĕпе тытса пыракан политикăн тĕп задачисенчен пĕри вăл пирĕн çĕршыври халăхсен пĕрлĕхĕне туслăхне, нумай нациллĕ Совет государствине малалла тĕреклетсе пырасси пулать. Халăхсем пурте пĕр тан праваллă пулмалли тата туслă пурăнмалли çинчен вĕрентекен идейăсем Совет Союзĕн тулашри политикинче те яланах уççăн палăрса тăраççĕ. Совет Союзĕ тĕнчери халăхсем хушшинче çирĕп мир тăвассишĕн, демократилле лагере тĕреклетессишĕн, пирĕн çĕршыври ĕçсыннисемпе ытти мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем хушшинчи тăванла çыхăнусене вăйлатассишĕн тата çирĕплетессишĕн яланах хытă тăрăшать.

Пирĕн çĕршывра халăхсем туслă пурăнмалли çинчен вĕрентекен идеологи пурнăça кĕчĕ. Çак идеологи пĕтĕм тĕнчене саралчĕ, унăн пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшĕ пысăк. Пусмăрта пурăнакан халăхсемшĕн çак идеологи ирĕклĕхшĕн, нацин никама пăхăнманлăхĕшĕн, демократипе социализмшăн, халăхсем хушшинчи çирĕп миршĕн кĕрешмелли хĕçпăшал пулса тăрать.

ХАЛĂХСЕН ТУСЛĂХĔ—ПРОЛЕТАРИЛЛЕ ИНТЕРНАЦИОНАЛИЗМ ИДЕЙИСЕМ ПУРНĂÇА КĔНИ

Ĕçсыннисен пурнăç интересĕсем халăхсене пĕр-пĕринпе мирлĕ, тăванла килĕштерсе пурăнма хушаççĕ. Ĕçсыннисен ытти халăхсене пусмăрлас тата çаратас шухăш çук. Вĕсем тĕрлĕ нацисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалла тăвасшăн. Буржуази тĕрлĕ нацисене пĕр-пĕринпе хирĕçтерме тăрăшать. Буржуази услам нумайрах илессишĕн хапсăнса этемлĕх умĕнче тем тĕрлĕ преступлени те тăвать, урăх халăхсен çĕршывне туртса илме вăрçăсем организацилет. Çавăн пек вăрçăсем ĕçсыннисене питех те пысăк инкек кӳреççĕ, суклăха тăратса хăвараççĕ.

Капитализмла обществăра нацисем хушшинчи çыхăнусем енĕпе икĕ идеологи — пролетарилле интернационализмпа буржуалла национализм пĕр-пĕрне хирĕç кĕрешеççĕ. Çак идеологисем вăра капитализмла обществăри икĕ тĕп класăн идеологийĕсем пулса тăраççĕ. Пролетарилле интернационализм идеологийĕ çапла вĕрентет: тĕрлĕ нацисен ĕçсыннисем пĕрлĕхлĕ пулмалла, вĕсен интересĕсем пĕр пек, вĕсем пĕр-пĕрне шанса тата туслă пурăнмалла, вĕсем кирек мĕнле эксплуатацие те хирĕç, коммунизмшăн пĕрлешсе кĕрешмелле. Буржуази идеологийĕ вăл — буржуалла национализм. Ку идеологи — нацисене пусмăрламалли идеологи, вăл нацисене пĕр тан правасемсĕр усрас йĕркене хӳтĕлет, нацисене пĕр-пĕринпе хирĕçтерме хĕтĕртет, çапла майпа ĕçсыннисен вăйне аркатса яма тата нацисене пусмăрласа пурăнас йĕркене çирĕплетме хăтланать.

Общество аталанса пынă май буржуалла национализмпа пролетарилле интернационализм хушшинчи кĕрешĕвĕн формисем улшăнаççĕ, çĕнĕ формăсем пулса пыраççĕ. Çак кĕрешӳ пĕр енчен—пролетарилле интернационализм прогрессивлă идеологи пулнине, пурнăçа лайăхлатакан хăватлă вăй пулнине, тепĕр енчен—буржуалла национализм реакцилле идеологи пулнине, вăл хальхи саманара питех те киревсĕр формăсем йышăнса пынине, ирсĕр шухăшсем ытларах сарма хăтланнине лайăх кăтартса парать.

Буржуалла государствăра буржуазипе унăн националистлă партийĕсем пуç пулса тăраççĕ. Буржуалла государство наци ыйтăвне татса пама пултарайман. Нумай нациллĕ буржуалла государствăсем ĕлĕк те пулнă, халĕ те пур. Вĕсен историйĕнчен çакă курăнать: классем хушшинчи хирĕçӳсем çивĕчленнине пула, буржуалла националистсем юрнех хĕтĕртнипе нацисем хушшинче хирĕçӳсем çивĕчленнине пула, пусмăрти халăхсемпе пусмăрлакан наци хушшинчи кĕрешӳ вăйланнине пула нумай нациллĕ буржуалла государствăсем пурпĕрех арканса каяççĕ. Нацисем пĕр-пĕрне хисеплессине хирĕç пыракан тата нацисене пусмăрлас политика буржуалла государствăна хавшатакан сăлтав пулса тăрать.

Халăхсем ирĕклĕ, пĕр тан праваллă пулмалли тата туслă пурăнмалли политикăна тытса пыракан нумай нациллĕ социализмла государствăра пурнăç пачах урăхла. Çак политика пурнăçшăн усăллă, витĕмлĕ тата прогрессивлă пулни ССР Союзĕнче лайăх палăрчĕ. Çак политика Совет государствин вăйĕсене ӳстерсе пырать, коммунизм тăвас ĕçе ăнăçлăн пурнăçласа пыма май парать.

СССР—ХАЛĂХСЕН ПĔР ТАН ПРАВАЛĂХĔПЕ ТУСЛĂХĔН ТĔСЛĔХĔ

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисене Коммунистсен партийĕ интернационализм шухăшĕ майлă воспитани панă. Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем Октябрьти революци çĕнтеричченех царизма тата капитализма хирĕç туслă пĕр çемье пулса кĕрешнĕ. Коммунистсен партийĕ хăйĕн ретĕсенче çĕршыври мĕнпур национальноçсен малта пыракан представителĕсене пĕрлештерсе тăракан парти, пĕтĕм Российăри парти пулса кĕрешĕве тухнă.

Пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсене революцилле пĕр çемьене пĕрлештерес тĕлĕшпе вырăссен рабочи класĕ калама çук пысăк ĕç тунă тата революцилле марксизм идейисем питех те пысăк вырăн йышăнса тăнă. Патша Российĕнчи пусмăрти халăхсем ирĕке тухассишĕн кĕрешнĕ вăхăтра çакна ăнланса илнĕ: рабочи класс кăна, хăйĕн малта пыракан авангарĕ — Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе кăна халăхсене ирĕке кăларма пултарать; рабочи класс çĕнтернипе кăна халăхсем ирĕклĕх тата пĕр тан правăсем илеççĕ, хăйсен государствине, хуçалăхне, культурине аталантарма пултараççĕ.

Чăн та çапла пулчĕ ĕнтĕ. Октябрьти революци этемлĕх историйĕнче çĕнĕ самана—социализм самани пуçарчĕ. Октябрьти революци ĕлĕк пусмăрта пулнă халăхсене ирĕке кăларчĕ, вĕсене хуçалăхпа культурăна чечеклентерессишĕн кĕрешмелли шанчăклă çул-йĕре кăтартса пачĕ. «Российăри халăхсен прависен декларацийĕ» ятлă историллĕ документра, ун çине Ленинпа Сталин алă пуснă, çĕршыври мĕнпур халăхсене пĕр тан правăсем пани çинчен пĕлтернĕ тата вĕсене социализм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешмешкĕн пĕрлешме чĕннĕ.

Пирĕн çĕршыври халăхсем, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, Советсен ялавĕ айĕнче, кивĕ тĕнчери мĕнпур вăйсене хирĕç хастарлăн кĕрешсе, наци тĕлĕшĕнчен ирĕклĕн аталанмалли право илнĕ. Пĕрешкел тĕллевсемшĕн, тĕнчери империализма—халăхсен тăшманне хирĕç пĕрлешсе кĕрешни пирĕн çĕршыври халăхсене тачăрах та тачăрах пĕтĕçтернĕ. Граждан вăрçипе интервенци вăхăтĕнче халăхсем хăйсен интересĕсен пĕрлĕхне çарпа политика тĕлĕшĕнчен союз тунипе çирĕплетнĕ, çакна пула вăрçăра интервентсемпе белогвардеецсене, буржуалла-националистла контрреволюцие çĕнтернĕ.

Çавăн пек лару-тăрура Коммунистсен партийĕ нациллĕ районсенче буржуалла националистсен сутăнчăкла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса пынă, Совет влаçĕ кашни халăхăн нацилле суверенитетне хисепленине ĕçре кăтартнă, кашни халăха демократилле никĕс çинче хăйĕн нацилле государственноçне туса йĕркелеме пулăшнă. Çак задачăна Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех пурнăçланă.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне туса хуни партин ленинла-сталинла наци политикин чаплă çĕнтерĕвĕ, пирĕн çĕршывра халăхсен туслăхне тĕреклетес тĕлĕшпе тунă чаплă та паллă ĕç пулчĕ. Октябрьти революци пур халăхсене те политикăлла пĕртан правăсем пани çинчен пĕлтерни ССР Союзĕнче наци ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе малтанхи утăм туни çеç пулнă-ха. Ĕлĕк пусмăрта пулнă халăхсене пурне те чăннипех пĕр тан праваллă тума вĕсем политика, хуçалăх, культура тĕлĕшĕнчен кая юлнине пĕтермелле пулнă. Парти ун чухне хăйĕн умне çакăн пек задачăсем лартнă: çĕршыври тĕрлĕ нацисем пурăнакан окраинăсенче кучухнехи промышленноçа тумалла; кая юлнă нацисем тата вак халăхсем валли хуçалăхăн аслă формисене тумалла; кая юлнисемпе малта пыракан национальноçсен ĕçсыннисем хуçалăх енĕпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пурăнассине йĕркелемелле; кая юлнă нацисемпе вак халăхсен культурине малалла аталантармалла; окраинăсенчи тĕп халăхран рабочи класс тата халăх интеллигенцийĕ хатĕрлемелле. Çак задачăсене пурнăçа кĕртнипе ССР Союзĕнче наци ыйтăвне татса панă, халăхсем туслă пурăнассине йĕркеленĕ.

Производствăра социализмла меслетпе ĕçлесси пурнăça кĕрсе пынă май пирĕн çĕршывра халăхсен туслăхĕ тăтăшах çирĕпленсе пычĕ, халăхсен туслăхĕн çирĕп никĕсĕ пулса тăчĕ. Социализмла экономика вара ĕлĕк пусмăрта пулнă халăхсем хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен кая юлнине пĕтермелли, вĕсем пĕр-пĕрне шанса тата туслă пурăнмалли йĕркене çирĕплетмелли материальнăй никĕс пулчĕ. Çĕршывра социализмла индустри тăвас тата ялхуçалăхне коллективизацилес ĕçсем советлă республикăсенче ăнăçлă пулса пычĕç, вĕсен сăн-сăпачĕсем тĕпренех улшăнса çĕнелчĕç. Совет государстви пĕрлĕхлĕ социализмла хуçалăх туса хучĕ, хăш республикăра мĕнле ĕçсене туса тăрассине, вĕсем пĕр-пĕрне пур енчен те пулăшса пырассине тĕрĕс йĕркелерĕ. Экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен ытла та кая юлнă халăхсене социализмла государство уйрăмах нумай пулăшрĕ.

Нацилле республикăсенче çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем лартнă, çĕнĕ чугун çулсем, каналсем, çĕнĕ хуласем тунă. Коллективизациленĕ ялхуçалăхне паха машинăсем нумай панă. Культура строительстви питĕ анлă саралнă: çĕнĕ шкулсем, наука учрежденийĕсем, театрсем, больницăсем тата ытти çавăн пек учрежденисем тунă. Пирĕн çĕршыва социальнăй пурнăçпа экономика тĕлĕшĕнчен урăхлатса çĕнетес ĕçре аслă вырăс халăхĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсене питех те нумай пулăшса пычĕ.

Коммунистсен партийĕ ССР Союзĕнче наци ыйтăвне татса парас, халăхсен туслăхне çирĕплетес ĕçре питĕ пысăк çитĕнӳсем тума пултарчĕ. Парти хăйĕн ертсе пырас ĕçĕнче тĕрлĕ нацисен расналăхĕсемпе уйрăмлăхĕсене пурне те шута илсе пычĕ. Буржуалла националистсем сăмахпа нацисен уйрăмлăхĕсене шута илмелле, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтермелле тесе суйăхса, чăннипе нацисен интересĕсене хирĕç пыраççĕ, вĕсем пĕр нацие тепĕр нацирен уйăрма май паракан расналăхсене малти вырăна кăларса тăратаççĕ. Коммунистсен партийĕ нацисен уйрăмлăхĕсене шута илсе, çавсемпе нацисен пĕрлĕхне çирĕплетме усă курать.

Тăван чĕлхене пур майсемпе те аталантарни, тăван чĕлхепе çырассине аталантарни, тăван чĕлхепе вĕрентекен шкулсем уçни, государствăн вырăнти органĕсенче тĕп халăхăн чĕлхипе ĕçлемелле туни, формипе нацилле тата содержанипе социализмла культурăна аталантарни, тĕп халăхран совет интеллигенцине хатĕрлени — çаксем пурте ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсене социализм тума, çав аслă ĕçе пурнăçлама хутшăнтарчĕç. Нацисен социализмла, интернационализмла содержанилле культурине пур майсемпе те аталантарса пырса, парти массăсене совет патриотизмĕ майлă пулма, халăхсен туслăхне çирĕп тытса пыма, социализмла идеологи шухăшĕ майлă пулма воспитани парас ĕçе анлă сарать.

Социализм çĕнтерни, эксплуататорла классене пĕтерни, буржуалла национализма аркатса тăкни, парти культурăпа воспитани ĕçне анлă сарни Совет Союзĕнчи нацисен сăн-сăпатне тĕпренех улăштарчĕ.

Ленинла-сталинла наци политикин чаплă çĕнтерĕвĕсем, социализм тăвассишĕн кĕрешнĕ çĕрте тунă çитĕнӳсем Совет Конституцийĕнче уççăн палăрса тăраççĕ. Буржуалла конституцисем хăйсен тĕп шухăшĕпе националистла конституцисем пулса тăраççĕ, вĕсенче расăсемпе нацисем пĕр тан праваллă пулмалли çинчен нимĕн те каламан. Совет Конституцийĕ пачах урăхла, унта ӳт тĕсĕ тата чĕлхе расна пулсан та, культура тĕлĕшĕнчи шай тата государство аталанăвĕн шайĕ расна пулсан та, нацисемпе расăсем хушшинче ытти кирек мĕнле уйрăмлăхсем пулсан та, вĕсем пурте пĕр тан праваллă пулни çинчен çырса хунă. Унта пур нацисемпе расăсем те хуçалăх, общество, государство тата культура ĕçĕсенче тата пурнăçра пĕр тан праваллă пулни çинчен каланă. Мĕнле раса е наци çыннине кура граждансен прависене тӳрремĕнех е урăхла майпа хĕснĕшĕн, çавăн пекех тата пĕр-пĕр расăна е нацие мала хунăшăн, ытти нацисене курайманнишĕн тата хисеплеменшĕн Совет çĕршывĕнче закон йĕркипе айăпласа наказани параççĕ.

ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ партин ленинла-сталинла наци политикине пурнăçлассишĕн кĕрешнĕ çĕрте тунă тĕп çĕнтерӳ, совет обществине малалла аталантарса пыракан хăватлă вăй пулчĕ. Халăхсен туслăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче ССР Союзĕнчи халăхсем пурте хамăрăн Тăван çĕршывăн чысĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ чухне тĕрекленсе пырса çирĕпленчĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ХАЛĂХСЕН ПĔРЛĔХĔПЕ ТУСЛĂХНЕ ЯЛАНАХ ТĔРЕКЛЕТСЕ ПЫМАЛЛА

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ тата ытларах тĕрекленчĕ. Çакă чи малтан нимĕçсен фашистла çарĕсем вăхăтлăха оккупациленине пула юхăннă районсенчи хуçалăха юсанă вăхăтра хытă палăрчĕ. Украинăна, Белоруссие, Молдавие, Эстоние, Литвăна, Латвие нимĕçсен фашистла захватчикĕсем оккупацилесе нумай сиен кӳчĕç пулсан, çав республикăсенчи хуçалăха юсама Россия Федерацийĕ, Кавказри тата Вăтам Азири советлă республикăсем питĕ нумай пулăшрĕç.

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта социализмла экономикăна малалла чечеклентерессишĕн Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем хăйсен вăй-халне парса кĕрешрĕç. Пирĕн социализмла хуçалăхпа культурăн партин XIX-мĕш съезчĕ палăртнă питĕ пысăк çитĕнĕвĕсем—пирĕн çĕршыври социализмла мĕнпур нацисемпе вак халăхсем пĕрлешсе тăрăшса ĕçлени результачĕ. Вăрçă хыççăнхи тапхăрта пирĕн социализмла индустри нумай çĕнĕ предприятисемпе пуянланчĕ: Грузипе Узбекистанра металлургин çĕнĕ завочĕсене тунă, РСФСР-та, Украинăра, Балтика тинĕсĕ тăрăхĕнчи çĕршывсенче, Белоруссире, Грузире, Азербайджанра машинăсем тăвакан çĕнĕ заводсем лартнă, пысăк гидроэлектростанцисем (сăмахран, Казахстанри Усть-Каменогорск, Узбекистанри Фархад станцийĕсем) тунă, Азербайджанра тата уйрăмах Иккĕмĕш Баку районĕсенче—Пушкăрт АССР-ĕпе Тутар АССР-ĕнче нефть промышленноçне малалла аталантарнă, Украинăра, Казахстанра тата Россия Федерацийĕнче çĕр кăмрăк промышленноçĕ çĕнĕ çитĕнӳсем тунă тата ытти те.

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта халăхсен туслăхĕн тата совет патриотизмĕн пурнăçа лайăхлатакан вăйĕ социализмла ăмăрту анлă саралнинче уйрăмах палăрчĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви республикăсем хушшинчи хуçалăхла тата культурăлла çыхăнусене малашне те ытларах тĕреклетсе тата сарса пырас политика тытса пыраççĕ, советлă республикăсем пĕр-пĕрне пулăшасси кашни республикăн интересĕсем Совет Союзĕн интересĕсемпе тачă çыхăнса тăнипе пулса пырать. Коммунистсен партийĕ союзлă республикăсен нушисене тивĕçтерессишĕн тăрăшни çак тĕслĕхрен курăнать: пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх Балтика тинĕсĕ тăрăхĕнчи советлă социализмлă республикăсене аталантарас тĕлĕшпе пысăк заданисем панă. Хальхи пилĕкçуллăхра Латвипе Литвăна тата Эстоние малалла индустриализацилесе пымалла, электричество энергийĕ туса кăларассине 2—2,5 хут ӳстермелле, Нарва çинче гидроэлектростанци лартмалла, Ригăра теплоэлектроцентраль тумалла, Каунасри гидроэлектростанцие тума тытăнмалла. Машинăсем тăвакан промышленноçа, ялхуçалăхне малалла аталантарма палăртнă.

Халăхсен туслăхĕн пултаруллă та витĕмлĕ вăйĕ экономика аталаннинче кăна мар, Совет Союзĕнчи халăхсен культури ӳссе пынинче те палăрать. Советлă пур республикăсенче те çĕнĕ шкулсем, наука институчĕсем, клубсем, кино тата ыттисене те тăвас ĕç анлă саралать. Союзлă 12 республикăра халĕ наука академийĕсем пур. Союзлă пур республикăсенче те вăтам шкулсемпе аслă шкулсенче специалистсем нумай вĕрентсе хатĕрлеççĕ, наукăсен çĕнĕ кандидачĕсемпе докторĕсем нумай хутшăнаççĕ.

Коммунизм туса пынă май социализмла нацисем культура енĕпе пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăма пуçларĕç. Советлă кашни республикăн нациллĕ культурăна аталантарас ĕçри çитĕнĕвĕсем çинчен ытти республикăсене пĕлтерсе тăраççĕ. Нациллĕ культурăсене пĕр-пĕрне пулăшнипе вăйлатса пыраççĕ. Вырăссен аслă культурин пуянлăхĕпе ытларах та ытларах усă курни Совет Союзĕнчи ытти халăхсен социализмла культурине ăнăçлă аталантарма пулăшать. Советлă республикăсенчи писательсем çырнă чи лайăх произведенисем—литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕсем пĕтĕм совет çĕршывĕпе хăвăрт саралаççĕ, вĕсем Совет Союзĕнчи мĕнпур национальноçсен ĕçсыннийĕсене коммунизмла воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Парти культура строительствин тата идейăллă воспитани ĕçĕн мĕнпур хатĕрĕсемпе массăсене интернационализм майлă тата совет патриотизмĕ майлă воспитани пама усă курать, çапла майпа пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхне тата ытларах çирĕплетме тăрăшать.

Халăхсен туслăхне тĕреклетессишĕн тăрăшасси буржуалла национализм тата космополитизм кирек мĕнле палăрнине те хирĕç тимлĕн кĕрешмеллине пĕлтерет. Пирĕн çĕршывра эксплуататорла классене пĕтернĕ, апла пулсан, буржуалла национализм валли пурнăçра никĕс юлман, çапах та национализм каяшĕсем юлнă-ха. Вĕсем литературăпа искусствăра, историре тата ытти обществăлла дисциплинăсенче палăраççĕ. Национализм ĕлĕкхи пурнăça ырланинче, хăйсен нацийĕн ăшне хупăнса ларма пăхнинче, çав халăха политика, хуçалăх тата культура тĕлĕшĕнчен чечеклентерес ĕçре ССР Союзĕнчи социализмла улшăнусем тата халăхсен туслăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине тивĕçлĕ хак паманнинче палăрать.

Буржуалла националистсем пĕр халăхсене тепĕр халăхсемпе хирĕçтерме, вырăссене хирĕç пырас туртăма аталантарма хăтланаççĕ. Буржуалла националистсене тăрă шыв çине кăларса, парти хăйĕн воспитани ĕçĕнче вырăс культурин питех те прогрессивлă рольне, вырăс халăхĕ çĕршыври халăхсен туслăхне малалла тĕреклетес ĕçре прогрессивлă пысăк ĕç тунине кăтартса парать.

ССР Союзĕнче национализмăн хăшпĕр каяшĕсем пуррипе империализм вăйĕсем нацисем хушшинче хирĕçӳсем кăларма усă курма хăтланаççĕ. Буржуалла националистсем совет обществинче, моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхпе тачă пĕрлешсе тăракан обществăра, пирĕн çынсемшĕн ют шухăша—нацисене хирĕçтерес идейăна сарма хăтланнă.

Ленинла-сталинла наци политикине пăснисене парти хăюллăн тăрă шыв çине кăларса, вĕсене татăклăн пĕтерсе пырать. Çавăн чухне парти тĕрлĕ авантюристсене, карьеристсене — наци политикине пăснисене хирĕç кĕрешес ятпа витĕнсе улталанипе нацисене пĕр-пĕринпе хирĕçтерме, буржуалла националистсен позицийĕсене çирĕплетме хăтланнă ирсĕр çынсене тăрă шыв çине кăларчĕ.

Парти ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла туслăхне пăсма тата хавшатма никама та ирĕк парас çук, тесе пĕлтерет. Совет Конституцийĕнче халăхсем пĕртан праваллă пулмалли çинчен каланисене пăсма хăтланакансене пурне те Совет государстви хытă айăпласа наказани парать.

Коммунистсен партийĕ, Совет государстви пирĕн çĕршыври мĕнпур расăсемпе нацисен аслă прависене хытă хӳтĕлеççĕ. Парти Октябрьти революцин аслă çĕнтерĕвне—халăхсен туслăхне—куç шăрçине сыхланă пекех сыхлать. Парти халăхсен туслăхне—совет обществине малалла аталантаракан хăватлă вăя, Совет государствин çирĕплĕхĕпе никам çĕнтерейменлĕхĕн çăлкуçне—пĕрмаях тĕреклетсе пынă тата малалла та çирĕплетсе пырĕ. Халăхсен туслăхĕ пирĕн çĕршывра çирĕпленсе тата чечекленсе пынă чухне пирĕншĕн нимĕнле тăшман та—шалти тăшмансем те, тулашри тăшмансем те хăрушă мар.

Кăçалхи август уйăхĕнче СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ пулчĕ. Сесси ССР Союзĕнчи халăхсен никам аркатайми туслăхне питех те лайăх кăтартса пачĕ.

Çак сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл промышленноçпа ялхуçалăхĕ енĕпе тăракан халех татса панмалли задачăсем çинчен, халăх пурнăçне малалла лайăхлатса пыма мĕн тумалли çинчен каларĕ, тĕнчери лару-тăрăва тĕплĕн сутатса пачĕ. Çак сăмахра питĕ пысăк задача кăларса тăратнă: халăх пурнăçне малалла лайăхлатса пымалла, çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçне хăвăрт аталантармалла, ялхуçалăхне пур енĕпе те пулăшас ĕçе организацилемелле, икĕ-виçĕ çул хушшинче халăх валли апат-çимĕç тата çăмăл промышленность валли чĕртавар питĕ нумай туса хатĕрлеме тытăнмалла.

Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕнче каланисем советлă мĕнпур республикăсене малалла чечеклентерес, ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхне çирĕплетес задачăсемпе пĕтĕмпех килĕшсе тăраççĕ. Пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем тăванла Коммунистсен партине шанаççĕ тата юратаççĕ. Вĕсем Коммунистсен партийĕн пĕтĕм совет халăхĕн пурнăçри интересĕсемпе килĕшсе тăракан политикине пĕрмаях ырлаççĕ, ăна пурнăçлама тăрăшаççĕ. Пирĕн аслă Тăван çĕршыври ĕçсыннисем, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăраканскерсем, коммунизм строительствинче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвас çулпа çирĕппĕн те шанчăклăн малалла пыраççĕ.

А. АЗИЗЯН.

Ĕçри çитĕнӳсем

Атăл леш енчи торф предприятийĕн коллективĕ кăçалхи сезонта нихçанхинчен те пысăкрах çитĕнӳ турĕ. Предприяти коллективĕ сезонта торф хатĕрлемелли плана срокран 12 кун маларах тултарчĕ. Электростанци валли пысăк пахалăхлă торф хатĕрленĕ. Е. Тимофеева, Н. Фасхутдинова, Л. Тимофеева юлташсем ертсе пыракан бригадăсем сезонти плана пĕр уйăх маларах тултарчĕç, планран иртерсе çĕршер тонна торф кăларчĕç. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ А. Лукина юлташ ертсе пыракан бригада пуринчен те мала тухрĕ.

Халĕ торф предприятин коллективĕ кăларнă торфа типĕтсе пухас ĕçе сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне вĕçлесе çитерессишĕн кĕрешет.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

* * *

Илнĕ обязательствăсене кăтартуллăн пурнăçлассишĕн кĕрешсе, «Волгохимлес» трестĕнчи химлесхозсен коллективĕсем ĕçре хăвăртлăха ӳстернĕçемĕн ӳстерсе пыраççĕ. Июль уйăхĕнчи производство планне иртерсе тултарнă.

Социализмла ăмăртура Улатăрти химлесхоз малта пырать. Ку химлесхоз иртнĕ уйăхра сухăр пухмалли плана 115 процент тултарнă.

Ĕçри çитĕнӳсене çирĕплетсе, химлесхоз коллективĕсем çĕршыва пысăк пахалăхлă сухăр ытларах парассишĕн кĕрешеççĕ.

П. ЖИКИН.

* * *

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисене тата сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмаха Сĕмĕрлери «Большевик» завод коллективĕ пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕ. Рабочисем продукци ытларах туса кăларас, унăн пахалăхне лайăхлатас, ĕç тухăçлăхне ӳстерес, продукцин хăйне ларакан хакне чакарас тĕлĕшпе усăллă сĕнӳсем нумай параççĕ.

А. Хусхутдинов, Т. Шефер, Ф. Индряков юлташсем продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн нумай предприятисем çителĕксĕр кĕрешни çинчен сесси тĕрĕс асăрхаттарса хăварнине палăртрĕç. Çапла кăтартса хăварни «Большевик» завода та пырса тивет. Çавăнпа та халĕ коллектив экономика тĕлĕшĕнчи кăтартусене лайăхлатассишĕн хастарлă кĕрешӳ пуçарчĕ.

Завод çичĕ уйăх хушшинче чылай çитĕнӳсем турĕ. Çичĕ уйăхри плана 108,1 процент тултарчĕ; юман экстракчĕ туса кăларасси, иртнĕ çулхи çав вăхăтпа танлаштарсан, 16 процент ӳснĕ. Ĕç тухăçлăхĕ 10 процент ытларах хăпарнă, продукцин хăйне ларакан хакĕ 5 процент чакнă.

Сесси решенийĕсем коллектива çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешме хавхалантараççĕ.

И. ЕВГЕНЬЕВ.

* * *

Улатăрти чугун çул техникумĕн вĕрентӳпе производство мастерскойĕ 8 уйăхри плана 7 уйăх та 10 кун хушшинче иртерсе тултарчĕ. Аш-какай тата арман комбиначĕн коллективĕсем виççĕмĕш кварталти юлашки уйăх шучĕпе ĕçлеççĕ.

Тумтир çĕлекен мастерской, çăкăр комбиначĕ, «14 лет Октября» тата «Красный восход» артельсем 8 уйăхри плана срокчĕн 20 кун маларах тултарчĕç.

И. АННЕНКОВ.

* * *

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисем çинчен тата Г. М. Маленков юлташ сессире каланă сăмах çинчен ăнлантарса панă хыççăн, Канашри вагонсем юсакан заводра социализмла ăмăрту çĕнĕ вăйпа саралчĕ.

— Г. М. Маленков юлташ предприятисен ĕçне вăйлатма кирлине, вĕсен экономикăпа производство кăтартăвĕсене лайăхлатма кирлине палăртрĕ. Эпĕ хам ĕçлекен станока тирпейлĕ сыхласа усратăп, ăна юсамасăр нумай вăхăт хушши ĕçлеме, брака пĕтерме, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме тăрăшатăп,—терĕ йывăç япаласем хатĕрлекен цехра ĕçлекен Порфирьев юлташ.

Ку цех коллективĕ июль уйăхĕнче планран иртерсе йывăç япаласем нумай туса кăларнă.

Рессорсемпе пружинăсем хатĕрлекен цехра та ĕç лайăх пырать. Иртнĕ уйăхра планран иртерсе 769 комплект рессор, 18 тонна пружина туса кăларнă. Рессорщиксем Петровпа Сорокин, тимĕрçĕ Рябинин юлташсем уйрăмах пысăк тухăçлă ĕçленине палăртмалла. Цех коллективĕ август уйăхĕнчи плана срокчен 7 кун маларах тултарассишĕн, заводри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава хăй аллинчех хăварассишĕн кĕрешет.

И. ЖУРАВЛЕВ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме тăрăшмаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Сталин ячĕпе тăракан колхозри кайăк-кĕшĕк фермин çурчĕ патне пынă чухне чăхсем кăтиклени аякранах илтĕнет. Çич-сакăр чăх кашта çине хăпарса ларнă та çăмарта тумалли йăвасем пушанасса кĕтеççĕ. Фермăра кашни 17 чăх пуçне пĕр йăва тивет. Зоотехника вĕрентнĕ тăрăх, 6—7 чăх валли пĕр йăва кирлĕ. Йăвасем çитмен пирки чылай чăхсем аякка кайса çăмарта тăваççĕ. Иртнĕ çулта çăмарта илмелли плана колхоз чылай тултарман. Фермăра чăхсене пăхса усрама условисем çук. Çурчĕ те юмахри пек «чăх урисем» çинче кăна тытăнса тăрать.

Колхозра ĕнесем те сĕт сахал параççĕ. Иртнĕ çулта ĕнесенчен сĕт суса илмелли плана çурринче те тултарман. Кăçалхи 7 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 401 литр кăна сĕт суса илнĕ. Ĕнесем мĕншĕн сĕт сахал параççĕ? Колхоз кĕтӳ çӳретмелли вырăнсене лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Çавна пула кунта курăк начар çитĕнет. Ĕнесем хĕлле утă та, силос та çисе кураймаççĕ.

Ĕнесене вăхăтра тата таса шывпа шăварассине йĕркелемен. Эпир пынă чухне ĕнесем ял вĕçĕнчи çырмара, хурсемпе сыснасем пăтратнă пĕчĕк пĕве патĕнче выртаççĕ. Вĕсем çакăнтан шыв ĕçеççĕ иккен. Пĕве патĕнче çăл пур, анчах та ăна тултарса лартнă.

Сысна витине хĕлле хатĕрлеме халĕ те тытăнман. Сумăр çусан витене шыв анать, стенасенче те шăтăк-çурăксем чылай. Ку çурта урăх çĕре куçарса юсама палăртнă, анчах çак ĕçе тума тытăнман-ха.

Ялти пĕчĕк пĕве хĕрринче сыснасем выртаççĕ. Вĕсем патĕнче ларакан ачасемпе калаçрăмăр.

— Çак сыснасене шкулта вĕренме пăрахнăранпа эпир, шкул ачисем, виççĕн пăхатпăр,— теççĕ вĕсем.

Колхозра сысна ферминче ĕçлеме çынсем уйăрса лартман. Хĕлле сыснасене колхозниксем черетпе пăхаççĕ. Çакăн пек чухне фермăран пĕчĕк тупăш илни тата сыснасем чирлени, вилни каламасăрах паллă.

Артелĕн лаша вити иккĕ. Вĕсене юсас тĕлĕшпе те нимĕн те туман. Сурăх, кайăк-кĕшĕк тата çамрăк выльăхсем валли суртсем пачах та çук. Суртсем çитменнипе выльăхсене хĕлле сивĕ, таса мар тата тăвăр çĕрте усрама тивет. Çавна пула çуллерен колхозра выльăхсем вилнипе чылай тăкак кураççĕ.

Мĕнле выводсем тунă-ха çакăнтан колхоз руководителĕсем? Пĕлтĕрхи йăнăшсене пĕтерме халĕ те тытăнман. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ĕç начар пырать. Апрель уйăхĕнче фермăри суртсене тĕпренех юсас пирки правлени ларăвĕнче решени йышăнса хунă. Ятарласа 12 çынтан строительство бригади организациленĕ. Анчах та бригадăра 5 çын кăна ĕçлет, çăва тухнăранпа вĕсем иртнĕ çул тума пуçланă 80 ĕне вырнаçмалăх вите стенисене кăна туса пĕтернĕ, çине витме хатĕрленĕ. Вите урайне сарман-ха, материал çук. Çак туса пĕтермен ĕне витине çумăрлă кунсенче ĕнесем, пăрусем, сурăхсем, хурсем хупаççĕ. Ферма патĕнче тымарçимĕçсемпе çĕрулми усрама вырăн çук.

Ферма работникĕсем пурăнмалли çуртра таса мар. Хĕлле пăрусемпе путеккесем усранă та, унтанпа çуман пулмалла.

Колхозра выльăх апачĕ хатĕрлессишĕн сахал тăрăшаççĕ. Халлĕхе силос 60 тонна кăна хывнă. Çакă вăл колхозри 160 сыснана çитерме те çителĕксĕр. Хатĕрленĕ выльăх апачĕсене шута илсе никама та актпа çирĕплетсе паман.

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинчи социализмла ăмăрту çинчен сăмах та хускатман. Фермăна агитаторсем пырса та курмаççĕ. Колхозри пуçламăш парторганизаци выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçрен аякра тăнипе пысăк йăнăш тăвать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе колхоз начар ĕçленин районти руководительсемшĕн ик-виçĕ çул каяллах паллă. Кун пирки чылай решенисем йышăннă, анчах лав паянхи кун та çав вырăнтах тăрать.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат бригади:
П. ВИКТОРОВ, А. ПАВЛОВ, Н. ОРЛОВ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли

КОМСОМОЛЬСКИ. Районти колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыма тăрăшаççĕ. Ытти ĕçсемпе пĕрлех обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕç те анлăн пулса пырать. Молотов ячĕпе тăракан колхоз кăçал выльăх апачĕ пĕлтĕрхинчен чылай нумайрах хатĕрлет. 88 гектар çинчен нумай çул ӳсекен курăк, 44 гектар утăлăх вика çулса, капана хывнă, 30 лав çăка милкки, 80 центнер витаминлă курăк хатĕрленĕ.

Çак кунсенче колхоз 300 тонна силос хыврĕ, силос хывмалли плана тултарчĕ. Силос хывма кукурузăпа, хĕвелçаврăнăш тунипе тата ытти тĕрлĕрен курăксемпе усă курнă.

Çавăн пекех «Знамя коммунизма», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем те силос хывмалли плана тултарчĕç.

Л. ТАЛЛЕРОВ.

Государство пулăшăвĕ

ЕТĔРНЕ. Нумай ачаллă амăшĕсене государство çулсеренех пысăк пулăшу парать.

Çак çулта районта 974 хĕрарăма 500 пин тенкĕ пособи укçи панă.

Нумай ачаллă 998 хĕрарăма «Ача амăшĕн мухтавĕ» орденĕсемпе медалĕсем парса наградăланă.

И. ПЕТРОВ.

Литература кружокĕ

ОКТЯБРЬСКИ. Районти «Хĕрлĕ Октябрь» хаçат редакцийĕ çумĕнче литература кружокĕ йĕркеленĕ. Кружок членĕсем алăпа çырса литература журналĕ кăлараççĕ. «Хĕрлĕ Октябрь» хаçатра литература кĕтесĕ туса, унта кружок ĕçĕсем çинчен, кружок членĕсен сăввисене, калавĕсене пичетлесе кăлараççĕ. Литература кружокĕн занятийĕсем уйăхра икшер хут пулаççĕ.

И. ГАЛКИН.



Чехословаки Республики. Прага-Высочанăри Шверма ячĕпе тăракан машинăсем тăвакан завод автомобиль çине вырнаçтарса лартнă крансем туса кăларнă. Çав крансене Китай Халăх Республики валли тунă. Кун пек кранпа 4 тонна таякан япалана çĕклесе урăх вырăна куçарса хума пулать. Китай Халăх Республикин заказне план тăрăх кăçалхи сентябрьте пурнăçламалла пулнă. Рабочисем пысăк çĕкленÿпе ĕçлесе заказа срокчен пурнăçланă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чехословакире туса кăларнă, автомобиль платформи çине вырнаçтарса лартнă кран.

ЧЕХОСЛОВАКИРИ ТЕЛЕГРАФ АГЕНТСТВИН ФОТОУКЕРЧĔКĔ.

Польша Халăх Республикин правительстви пĕлтерни

ВАРШАВА, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри хаçатсем паян Польша Халăх Республикин правительстви Германи ыйтăвĕ тĕлĕшпе пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Польша Халăх Республикин правительстви Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн правительстви Германи ыйтăвĕ тăрăх йышăннă решение чĕререн саламлать.

Çак решенисем Европăра çирĕп мир туса хума, Хĕвеланăç Германирен çĕнĕ вăрçăн хăрушă вучахĕ туса хума хăтланакан империалистсен ирсĕр ĕçĕсене путлантарса лартма, çавăн пекех тата пĕрлешнĕ, демократиллĕ, мире юратакан Германи туса хума пулăшаççĕ.

Çак решенисем пĕтĕм халăхсемшĕн, вăл шутра Германи кÿрши пулса тăракан Польша халăхĕшĕн те, пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен Польша халăхĕ темиçе хутчен те Германи милитаризмĕ тапăнса килнипе асап курнă.

Çак решенисем Польша хăрушсăрлăхне тĕреклетеççĕ, реваншистсемпе ревизионистсен ирсĕр ĕçĕсене, çавăн пекех тата вĕсене хÿтĕлесе тăракан çынсен усал ĕçĕсене хыттăн пырса çапаççĕ, пĕтĕм Германире мирпе демократи вăйĕсене ÿстереççĕ. Çак вăйсене Демократиллĕ Германи Республики палăртса тăрать.

Германи репарацисем тĕлĕшпе йышăннă обязательствăсене чылай енчен пурнăçланине шута илсе, Германин экономикăлла ĕçĕсене лайăхлатни ăна мирлĕн аталантармалли интересене тивĕçтернине шута илсе, Польша Халăх Республикин правительстви, Германи ыйтăвне мирлĕ тата демократиллĕ никĕс çинче йĕркелес ĕçе хăй енчен малашне те пулăшса пыма тăрăшса, çавăн пекех тата Польша халăхĕн тата мире юратакан мĕнпур халăхсен интересĕсене шута илсе, 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Германирен репараци илсе тăрассине чарса лартма решени йышăннă.

Çак решенисем Германи халăхне хăйĕн экономикине тĕреклетес ĕçре кăна мар, çавăн пекех тата пĕрлĕх туса хума, пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ Германи государстви туса хума кирлĕ условисем хатĕрлес ĕçре те чылай пысăк пулăшу параççĕ, тесе СССР правительстви шанса тăнипе Польша правительстви пĕтĕмпех килĕшет. Польша халăхĕ шăпах та çакăн пек тăвассищĕн тăрать ĕнтĕ».

Вильгельм Пик правительство делегацине йышăннă

БЕРЛИН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Демократиллĕ Германи Республикин президенчĕ Вильгельм Пик Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министр Отто Гротеволь ертсе пыракан правительство делегацине, Совет Правительствипе калаçусем иртерсе ĕнер Мускавран таврăннă хыççăн, паян хăйĕн Нидершенхаузенри (Берлин) резиденцийĕнче йышăннă.

Правительство делегацийĕ президента Совет Правительствипе иртернĕ калаçусен результачĕсем çинчен каласа панă.

Монголи Халăх Республикинче участоксенчи халăх сучĕсен суйлавне хатĕрленеççĕ

УЛАН-БАТОР, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Монголи Халăх Республикин Аслă Халăх Хурал Президиумĕ участоксенчи халăх сучĕсене суйламалли положени çирĕплетнĕ. Суйлав кăçалхи октябрĕн 18-мĕшĕнче пулать. Монголи Халăх Республикин историйĕнче пирвайхи хут судсене халăх пурне те тивĕç, пĕр тан тата тÿрех суйламалли правăпа вăрттăн сасăласа суйлать.

Корейăри перемири пирки

ПЕКИН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ августăн 21-мĕшĕнче Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Корейăпа Китай енĕ демаркаци линийĕ тăрăх августăн 17-мĕшĕнче чикĕ паллисене лартса пĕтернĕ. Анчах çав ĕçе пĕтĕмпе тĕрĕслесе тухма май çук-ха, мĕншĕн тесен Америка енĕ ку тарана çитсе те демаркаци зонин чылай секторĕсенче чикĕ паллисене лартса пĕтермен.

Тыткăнри çар çыннисене тавăрса пани

ПЕКИН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Августăн 22-мĕшĕнче Корейăпа Китай енĕ Америка енне тыткăнра пулнисене 437 çын тавăрса панă. Çав шутра: 94 американец, 23 акăлчан, 13 канадец, 3 австралиец, 2 француз, 1 турок, 1 колумбиец тата 300 çын Кăнтăр Корейăран.

Америка енĕ Корея Халăх çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисене 2.402 çын тавăрса панă.

АМЕРИКА ÇАР КОМАНДОВАНИЙĔ ЧĂНЛĂХРАН ХĂРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Сан-Францискăран пĕлтернĕ тăрăх, вырăнти чылай хаçатсен корреспонденчĕсем США-н Инçет Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ кăларнă приказа хирĕç протест панă. Çак приказ тыткăнран таврăннă çар çыннисене хăйсем Корейăра тыткăнра пулни çинчен хаçат представителĕсене каласа пама чарать.

Приказра каланă тăрăх, тыткăнран таврăннă çар çыннисем США çарĕн официальнăй представителĕсем умĕнче кăна хаçат представителĕсемпе калаçма пултараççĕ. Çар представителĕсен калаçу мĕнле пулнине тĕрĕслесе тăмалла.

АРАБ ÇĔРШЫВĔСЕМПЕ АЗИРИ ÇĔРШЫВСЕН УШКĂНĔ ООН-ăн ХĂРУШСĂРЛĂХ СОВЕТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин ООН çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, араб çĕршывĕсемпе Азири çĕршывсен представителĕсем Мароккăри ĕçсем çинчен Хăрушсăрлăх Совечĕн председательне çыру ярса панă. Унта çапла каланă:

«Эпир, Афганистан, Бирма, Египет, Инди, Индонези, Иран, Ирак, Ливан, Либери, Пакистан, Филиппин, Саудовски Арави, Сири, Таиланд тата Йемен представителĕсем, Франци влаçĕсем Марокко ĕçĕсене законсăр хутшăннă пирки тата Мароккăн законлă султанне вырăнтан кăларнă пирки пулса тăнă тĕнчери ĕçсене, тĕнчери мирпе хăрушсăрлăхшăн пулса тухнă хăрушлăха тĕрĕслесе тухма, 35/1 статья тăрăх, Хăрушсăрлăх Совечĕн ларăвне васкавлăн пухма, устав тăрăх сирĕнтен тивĕçлĕ мерăсем йышăнча ыйтатпăр».

ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРЕ КОМПАРТИЕ ХĔСĔРЛЕÇÇĔ

БЕРЛИН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бонри шалти ĕçсен министрĕ Лер çапла каласа панă: Хĕвеланăç Германири Карлсруэ хулинчи конституци сучĕ кăçалхи ноябрь уйăхĕнче коммунистсен партине ĕçлеме чарса лартас тĕллевпе суд ĕçĕ пуçарать.

Врач канашĕсем

Вар-хырăм чирĕсенчен сыхланмалли майсем

Çулла тата кĕркунне вар-хырăм чирĕсем сарăлма пултараççĕ. Вĕсенчен йывăр иртекенни дизентери пулать. Ăна саракан микробсем питĕ пĕчĕк, вĕсене микроскоппа кăна курма май пур. Дизентери ересен, çын вĕриленсе каять (температура ÿсет), пĕтĕм шăмшак йывăрланать, вар чике-чике хытă ыратать, час-часах тула чуптарать. Çăмăл дизентери пулсан, вар ытлах ыратмасть, çын хăйне сывлăх лайăх чухнехи пекех туять.

Дизентери çăмăл чухне те вăраха кайсан çын сывлăхне хавшатма пултарать. Хăш чухне ку чир темиçе уйăха та пырать, сайра хутра темиçе çула пыни те пулать. Çавăн пек нумая пыракан дизентерие мĕнле пĕлмелле?

Ун пек чухне чирлĕ çыннăн вăхăтран-вăхăта вар ыратма пуçлать, тула час-часах хăвалать, хăш чухне юнлă пулать. Çынна хутран-ситрен йывăр, шăмшак ыратнă пек туйăнать, унтан вăл чиперех самайланать, вара темиçе кун хушши лайăххах сÿрет, сывлăх пĕтĕмпех тÿрленсе çитнĕ пек туйăнать, анчах часах тепĕр хут вар ыратма пуçлать. Çакă вара вăраха пыракан дизентери йывăра кĕрсе кайнине пĕлтерет.

Дизентерипе (юнлă варвиттипе) чирленĕ çынна хăвăртрах больницăна леçес пулать. Больницăна вăхăтра пырса выртман е килтех сывалма тăрăшакан çынсен чирĕ яланах тенĕ пек нумай вăхăта тăсăлать, çын сывлăхне хытă хавшатать.

Юлашки çулсенче варвиттинчен сыватма çĕнĕ эмелсем тума пуçларĕç: сульфидин, сульфазол, дисульфан, синтомицин, этазол т. ыт. те. Анчах вăл эмелсене врач хушнипе анчах [illegible] йышăнма юрать. Пĕлмесĕр йышăнсан, сывлăхшăн сиен пулма пултарать.

Дизентерирен сыватас, уйрăмах ку чир ересрен сыхланас ĕçре бактериофаг пысăк вырăн йышăнса тăрать. Бактериофаг дизентери микробĕсене пĕтерет. Дизентери бактериофагне выçăрла ăша илеççĕ. Вăл шĕвекки те пулать, таблеткăпа та пулать. Бактериофаг ĕçес умĕн пĕр кашăк сода шывĕ ĕçес пулать, пĕр стакан шыв çине пĕр чей кашăкĕ сода ярса ирĕлтермелле. Дизентери чирĕ ересрен бактериофага чирлĕ çынпа хутшăнакансене параççĕ, сăмахран, пĕр суртри е пĕр хваттерти çынсене.

Дизентери чирĕ кирек хăçан та пулма пултарать, анчах та вăл пуринчен те ытларах çу кунĕсемпе кĕркунне сарăлать.

Дизентери микробĕ çын ăшне апатпа пĕрле е шывпа лекет. Лекнĕ хыççăн 2—5 кунтан варвитти пуçланать.

Дизентерипе чирлĕ çынсем хăйсемпе хутшăнакан çынсене яланах чир ертме пултараççĕ. Ку тĕлĕшпе нумая пыракан çăмăл дизентери пушшех хăрушă, мĕншĕн тесен ун пек чухне врача та чĕнмесçĕ, больницăна та каймаççĕ, вара чир бактерийĕсем сывăхри çынсем хушшинче сарăлма пултараççĕ. Ун пек çынсенчен бактерисем апат-çимĕçе е шыва лексен, дизентери чирĕ халăх хушшине сарăлать. Дизентерипе чирлени палăрсан (варвитти пуçланать, температура ÿсет) çийĕнчех врач патне каймалла. Дизентерипе чирленĕ çынна хăвăртрах больницăна леçес пулать. Унта кирлĕ пек пăхнипе вăл хăвăртрах сывалать. Дизентерипе чирленĕ çынна килтен, больницăна леçиччен, лайăхрах пăхма тăрăшас пулать, сыхăнуллă пулмалла: сывăрма уйрăм вырăн уйăрса памалла, алшăллисем те унăн хăйĕн пулмалла, апат уйрăм чашăк-тирĕксенчен çитермелле.

Чирленĕ çынсен кĕпи-йĕмĕсене, простыньăсене çунă чухне шыв çине сода е кĕл ярса 20—30 минут хушши вĕретмелле. Вăл çинĕ чашăк-тирĕксене те сода шывĕпе çумалла. Вăл тула тухнă вырăнсене бактерисене пĕтерекен растворпа, сăмахран, известь шывĕпе сапмалла. Известь шывне çапла хатĕрлемелле: пĕр пай çунтарман известь çине икĕ пай шыв ярса хутшăнтармалла. Известь шывне хатĕрленĕ чухне вăл куçа сиенлесрен асăрханас пулать. Известь растворĕ тума май килмесен, вĕри шывпа сапмалла. Дизентерипе чирленĕ çын пулнă пÿртри урайне, стенасене, алăк хăлăпĕсене вĕри шывпа, супăньпе çуса тасатас пулать.

Яланах çакна пĕлсе тăмалла: дизентери бактерийĕсем пуринчен ытла хура алăран ересçĕ. Çавăнпа та чирлĕ çынпа хутшăнмалла пулсан, вăл усă курнă япаласене тытма тивет пулсан, апат умĕн, тула тухсан кашнинчех аллăсене лайăх çуса тасатмалла. Çак правилăна дизентери тата вар тифĕпе тин çеç чирлесе иртернĕ çынсем уйрăмах çирĕп тытса пымалла.

Дизентерипе вар тифне шăнасем те сараççĕ. Шăнасем апат-çимĕç çине, чашăк-тирĕк çине лараççĕ, вара çав апат-çимĕç çинче те, чашăк-тирĕк çинче те чир бактерийĕсем юлаççĕ. Çав апат-çимĕçе çиекен е çав чашăк-тирĕкпе усă куракан çынна дизентери е вар тифĕ ерме пултарать.

Шăнасене пĕтерес пулать. Вĕсене пĕтермелли эмелсене аптека магазинĕсенче сутаççĕ. Шăнасене ДДТ тата Дуст порошокĕсем те лайăх пĕтереççĕ. Вĕсене шăнасем ларакан вырăнсене сапса тухмалла. ДДТ тата Дуст препарачĕсем те çыншăн сиенлĕ мар. Вĕсем хăнтласемпе таракансене те пĕтереççĕ. Шăнасем пÿрте, столовăйсене, кухньăна, апат-çимĕç склачĕсене вĕçсе ан кĕччĕр тесе, чÿречесене марлĕ карас пулать.

Дизентери пуринчен ытла апат-çимĕç е шыв урлă ерет тенĕччĕ. Çавăнпа та чĕрĕ шыв ĕçмелле мар, вĕретнĕ шыв кăна ĕçмелле. Сĕт те вĕретмесĕр ĕçмелле мар, вĕретсе ĕçес пулать. Вĕретнĕ чухне дизентери бактерийĕсем пĕтеççĕ. Пахча çимĕçсене çумасăр çиме кирлĕ мар. Апат-çимĕçе, чашăк-тирĕке яланах витсе хумалла, вĕсем çине шăнасем ан ларччăр. Çавăн пекех апат-çимĕçе çуман алăсемпе тыткаламалла мар.

Дизентерипе тата вар тифĕпе чирлессинчен сыхланас тесе, прививка тутарас пулать, унтан шанчăкли нимĕн те çук. Прививка тунă çынна дизентери чирĕ ермест. Прививкăна врач хушнипе тăваççĕ.

Дизентерипе е вар тифĕпе чирленĕ çынсене çавăнтах больницăна леçмелле, кил-çурта лайăх тасатмалла. Кил хушшине таса тытмалла. Çăлсене тасамарлăхсем лексрен асăрхаса тăмалла.

Санитари минимумне пăхăнса, таса пурăнакан çыншăн дизентери чирĕ хăрушă мар.

Врач К. ПАЙРАШ.

Францири забастовка

ПАРИЖ, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри хаçатсем «Форс уврие» тата «Христианла ĕçсыннисен конфедерацийĕ» ятлă профсоюзсен раскольникла руководствипе правительство хушшинче тунă килĕшÿре мĕн çинчен каланине пĕлтереççĕ. Демократиллĕ хаçатсем çав килĕшĕве «раскольниксен çĕнĕ ултавлă ĕçĕ» тесе ят параççĕ. Правительство сентябрĕн 30-мĕшĕнче коллективлă договорсем енĕпе ĕçлекен аслă комиссие пухма, забастовка тăвакансене хирĕç нимĕнле наказани йышăнмасăр хăварма, пенсисем пирки чрезвычайнăй декретсемпе усă курасси çинчен профсоюзсемпе (сăмах профсоюзсен раскольникла руководстви пирки пырать) калаçса пăхма, сахал ĕç укçи илекен работниксем тĕлĕшпе хускатнă ыйтăва «майлă» пăхса тухма тата вырăнта коллективлă договорсем тăвас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе «предпринимательсене хĕтĕртме» сăмах панă.

Забастовка тăвакансем вара, паллă ĕнтĕ, правительствăн чрезвычайнăй декречĕсене йăлтах пăрахăçа кăларма тата пуринне те ĕç укçи ÿстерме ыйтнă.

Францири демократиллĕ общественность тата забастовка тăвакан ĕçсыннисем çак ултавлă килĕшÿ çинчен пĕлнĕ хыççăн хытă тарăхнă. «Çав раскольникла руководительсем,— тесе çырать паян Пĕтĕм Францири ĕç конфедерацийĕн секретарĕ Гастон Монмуссо «Юманите» хаçатра,— хăйсен профсоюзĕсен членĕсемпе калаçса пăхмасăрах, хăйсен ырă ятне сыхласа хăварма ĕмĕтленсе, правительствăн пушă сăмахĕсем хыççăн кайса, ĕçсыннисен интересĕсене сутнă. Вĕсен киревсĕр килĕшĕвĕ правительствăн ĕçсыннисене чухăна кăларакан декречĕсене нимĕн тĕкĕнмесĕр хăварать. Забастовка тăвакансем шăпах çав декретсене хирĕç кĕрешÿ пуçласа янă та ĕнтĕ... Кĕрешÿ хĕрсе çитнĕ вăхăтра ĕçсыннисен интересĕсене сутни тата тепĕр ĕçе—хăшпĕр буржуалла политикăлла партисем парламент пухассине сирсе яма хăтланнине пулăшать».

«Юманите» хаçат çапла çырать: «христианла ĕçсыннисен конфедерацийĕ» тата «Форс уврие» профсоюзсен рядовой членĕсем, хăйсен профсоюзĕсен руководстви хушнине пăхмасăрах, чугун çул транспортĕнче те, почтăпа телеграфра тата телефон станцийĕсенче забастовка тума чарăнман. Ĕнер Парижри ĕç биржинче забастовка тăвакансен митингĕ пулса иртнĕ, унта çыхăну ĕçĕнчи работниксен тĕрлĕ профсоюзĕсенче тăракансем пурĕ 20 пин çын пулнă. Митингра йышăннă резолюцире çапла каланă: «Париж районĕнчи почтăсенче, телеграфпа телефон станцийĕсенче ĕçлекен 20 пин çын «христианла ĕçсыннисен конфедерацийĕн» тата «Форс уврие» руководителĕсен сутăнчăкла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларать. Митинга пухăннисем почтăра ĕçлекен мĕнпур ĕçсыннисемпе хĕрарăмсене пĕр-пĕринпе питĕ тачă çыхăнса малалла çирĕп кĕрешме чĕнеççĕ. Çав кĕрешÿ ăнăçлăн вĕçленессе эпир çирĕп шанса тăратпăр».

«Христианла ĕçсыннисен конфедерацийĕ» тата «Форс уврие» профсоюзсен Парижри тата Париж районĕнчи вырăнти организацийĕсем забастовкăна малалла тăсма чĕннĕ. Парижăн нумай округĕсенче почтăсенче, телеграфпа телефон станцийĕсенче ĕçлекенсем паян та забастовка тăваççĕ.

Францин провинцири ытти нумай хулисемпе департаменчĕсенчи почтăсенче ĕçлекенсем те забастовка тума чарăнман.

«Юманите» хаçат çапла çырать: профсоюзсен пур организацийĕсем те йышăннă тăрăх Клермон-Ферран, Лион, Тур, Нант, Монлюсон, Дижон-Ренн, Тулуза тата Францири ытти нумай хуласенче чугун çул çинче ĕçлекенсем забастовкăна малалла тăсма йышăннă.

«Юманите» хаçат тата çапла çырать: газ тата электричество промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен пĕрлĕхне аркатма хăтланнинчен нимĕн те тухман. Промышленноçăн çак отраслисенчи рабочисене пĕрлештерсе тăракан профсоюз федерацийĕсем паян пурте пĕр кăмăллă пулса забастовка тăваççĕ.

Металлурги тата металран япаласем тăвакан промышленноçсенче те забастовка сарăлса пырать. Монлюсон, Тулуза, Лион, Анже, Марсель, Ницца, Брест хулисенчи металлистсем пурте забастовка тăваççĕ. Çавăн пекех Париж районĕнчи нумай предприятисенче ĕçлекен рабочисем (çав шутра «Рено» завочĕсенчи рабочисем те пур цехсенче тенĕ пекех) забастовка тăваççĕ. Мерт тата Мозель департаментĕнчи предприятисенче те забастовка пырать.

Çĕр кăмрăк промышленноçĕнчи рабочисем те забастовка тума чарăнман. Юлашки кунсенче хими промышленноçĕнче те забастовкăсем анлăн сарăлнă. Нант хулинчи «Дюбо тата горже», химилле удобренисем тăвакан «Кюльман» тата «Компани Борделез» завочĕсенчи рабочисем те ĕнертен пуçласа забастовкăна хутшăннă. Пир-авăр промышленноçĕнчи забастовка Анатри Сена, Сомма тата Уаза департаменчĕсенчи çĕнĕ предприятисене сарăлнă.

Парижри тата провинцири чылай хулисенчи пекарньăсенче ĕçлекенсем виçĕ кун хушши забастовка тума йышăннă.

Наци пухăвĕн бюровĕ парламентăн чрезвычайнăй сессине пухма килĕшмен

ПАРИЖ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Наци пухăвĕн бюровĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура тепĕр хут парламентăн чрезвычайнăй сессине пухасси çинчен сÿтсе явнă. «Энформасьон» хаçат çапла пĕлтерет: бюро ларăвĕ уçăлас умĕн, Наци пухăвĕн председателĕ Эдуард Эррио туса хунă йĕрке тăрăх, сесси пухма ыйтса 208 депутат алăпа çырса панă требованисене регистрациленĕ. Çапла ĕнтĕ, сесси пухма кирли çинчен «çирĕплетсе калама» пĕр сасă кăна çитмест. Конституци тăрăх, сесси пухма 209 сасă пулни кирлĕ. Сесси пухма телеграф тăрăх ыйтнă депутатсен йышĕ çак шутран та иртет.

Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Наци пухăвĕн бюровĕ парламент сессине пухмалла мар тунă. Çак сĕнÿшĕн 10 сасă пулнă. 8 депутат хирĕç сасăланă, 2 депутат нихăш майлă та сасăламан. Бюро: сесси пухма «сасăсем çителĕксĕр», тенĕ.

ВЕНГРИРЕ ФИЗИКСЕН СЪЕЗЧĔ ПУХĂННА

БУДАПЕШТ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Будапештра Венгри Халăх Республикин Наука академийĕ тата Лоранд Этвеш ячĕпе тăракан наукăлла физика обществи пухнă Венгри физикĕсен пĕрремĕш съезчĕ уçăлнă. Съезд ĕçне Совет Союзĕн, Польша, Чехословаки, Болгари ученăйĕсем хутшăнаççĕ.

Совет шахматисчĕсем Швейцарие туха кайнă

Августăн 24-мĕшĕнче Мускавран Цюриха (Швейцари) тĕнчери шахмат турнирне хутшăнма совет шахматисчĕсем — Ю. Авербах, И. Болеславский, Д. Бронштейн, Е. Геллер, П. Керес, А. Котов, Т. Петросян, В. Смыслов тата М. Тайманов гроссмейстерсем тухса кайнă.

Цюрихри турнир суйласа илмелли ăмăрту пулса тăрать. Пĕтĕм тĕнчери шахмат федерацийĕ йышăннă система тăрăх, Цюрихри турнирта çĕнтернĕ шахматист тĕнчере мала тухассишĕн пыракан матчра тĕнче чемпионĕпе М. Ботвинникпа тĕл пулса вылять. Ку матч 1954 çулта пулать.

Цюрихри турнир икĕ пайран тăрать, вăл октябрь уйăхĕ вĕçне çитиччен пырать.

Цюрихри турнира çавăн пекех тата гроссмейстерсем: Л. Сабо, (Венгри), Г. Штальберг (Швеци), М. Эйве (Голланди), М. Найдорф (Аргентина), С. Решевский (США) тата С. Глигорич (Югослави) хутшăнаççĕ.

Цюрихра 15 гроссмейстер хушшинче пулса иртекен турнир шахмат енĕпе кăçалхи чи пысăк ăмăрту пулать. Турнир августăн 29-мĕшĕнче уçăлмалла. (ТАСС).

В. И. ЛЕНИН СОЧИНЕНИЙĔСЕН 23-МĔШ ТОМНЕ РУМЫН ЧĔЛХИПЕ КĂЛАРНĂ

БУХАРЕСТ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири политикăлла литература издательстви В. И. Ленин сочиненийĕсен 23-мĕш томне румын чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

* * *

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья.—Тырпул пухса кĕртес ĕçе хăвăртрах вĕçлемелле.

Республикăри предприятисенче çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн ăмăрту мĕнле пыни çинчен.

А. Азизян.—Халăхсен туслăхĕ—нумай нациллĕ Совет государствин тĕп никĕсĕ.

И. Данилов, Г. Семенов, А. Титов, В. Сергеев.—Вырăх,пĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине тимлĕ пăхмаççĕ (Етĕрне районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз çинчен).

Ют çĕршывсенчен, Совет Союзĕнчи тата республикăри тĕрлĕ вырăнсенчен килнĕ хыпарсем.

Çăмăл атлетсен республикăри ăмăртăвĕ

Августăн 22—23-мĕшĕсенче Шупашкарти «Энергия» спорт обществин стадионĕнче профсоюзсем енĕпе республикăра мала тухассишĕн çăмăл атлетсен ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăва профсоюзсем çумĕнчи спорт обществисен, профсоюз обкомĕсен тата промышленность предприятийĕсем çумĕнчи физкультурăпа спорт коллективĕсен сборнăй командисем хутшăнчĕç.

Спорт обществисем енĕпе «Энергия» спорт обществин коллективĕ малти вырăна тухса куçса çÿрекен приз илчĕ. Çак обществăн командинче Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче ĕçлекен çăмăл атлетсем пулчĕç. «Искра» спорт обществин спортсменĕсем иккĕмĕш вырăна, «Медик» общество команди виççĕмĕш вырăна тухрĕç. Шупашкарти чăлха фабрикин команди пуçламăш коллективсем валли тунă куçса çÿрекен парне илчĕ.

Çăмăл атлетсен ăмăртăвĕ чылай профсоюзсен организацийĕсем физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине кăтартса пачĕ. Вĕсем хăйсен спорт обществисем мĕнле ĕçленипе, предприятисенчи физкультурăпа спорт коллективĕсен ĕçĕпе сахал интересленеççĕ. Çавна пула çăмăл атлетсен кăçалхи ăмăртăвĕнче нумай участниксем паха çитĕнÿсем тăваймарĕç. Ăмăртура мала тухса приз илме тивĕçлĕ пулнисен результачĕсем те Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш разрядпа кăна танлашаççĕ. Уйрăммăнах «Буревестник», «Знамя» спорт обществисен, финанспа банк работникĕсен, вырăнти промышленность тата суту-илÿ работникĕсен профсоюзĕсем питех те начар хатĕрленнĕ коллективсем тăратнă. Çав обществăсемпе профсоюзсен командисенчи çăмăл атлетсем спорт техникине питĕ начар пĕлеççĕ.

Ăмăртура чи малти вырăна тухассишĕн «Энергия», «Искра» тата «Медик» спорт обществисен командисем кĕрешрĕç. «Энергия» спорт обществин çăмăл атлечĕсем малти 14 вырăна, «Искра» спортсменĕсем—9 вырăна йышăнчĕç. «Медик» спорт обществин команди икĕ енĕпе малти вырăна тухрĕ.

Вăрăмăшне сикес, барьерсем урлă сиксе 110 метр чупас тата чупса пырса виçĕ хут сикес тĕлĕшпе Е. Бортяницкий («Энергия») лайăх тĕслĕх кăтартрĕ. Çак общество членĕ Л. Емельянова 100 тата 400 метр хăвăрт чупса тухас, çÿллĕшне тата вăрăмăшне сикес тĕлĕшпе малти вырăна йышăнчĕ. Е. Покарева диск ывăтас, йĕтре тĕртес тата барьер урлă сиксе 80 метр чупас енĕпе мала тухса «Энергия» спорт обществин командине çĕнтерÿ тума пулăшрĕ. 800 тата 1.500 метр хăвăрт чупса тухса «Энергия» спорт обществин представителĕсем Е. Мишенкина, С. Усов малти вырăна йышăнчĕç. Çавăн пекех арçынсен тата хĕрсен 4×100 эстафетăллă чупура «Энергия» спорт обществин çăмăл атлечĕсем çĕнтерÿ турĕç.

«Искра» спорт обществин представителĕ В. Байдеряков 10 километр хăвăрт утса тухса пĕррремĕш вырăн йышăнчĕ, республикăра çĕнĕ рекорд турĕ. Çак дистанцие вăл 54 минут та 40 секундра утса тухрĕ. Етĕрнери «Искра» спорт обществин çăмăл атлечĕ И. Шмельков сăнă тата граната ывăтас, çавăн пекех тата йĕтре тĕртес тĕлĕшпе пĕррремĕш вырăна тухрĕ. Л. Толстов («Искра») 400 метра пуринчен хăвăрт чупса тухрĕ. СССР спорт мастерĕ М. Гущина сăнă тата граната ывăтас тĕлĕшпе «Искра» командине çĕнтерÿ тума май пачĕ. 5.000 метра ăмăртса чупса Ю. Кириллов («Искра») финиш патне чи малтан çитрĕ. Çак обществăн представителĕ П. Петухов спортсмен шалчапа çÿлелле сиксе лайăх тĕслĕх кăтартрĕ.

Финалта 100 метр ăмăртса чупса, арçынсенчен П. Романов («Медик») çĕнтерчĕ, йĕтре тĕртсе А. Моисеев («Медик») пĕррремĕш вырăн йышăнчĕ.

Редактор заместителĕ
М. Н. ЯКИМОВ.

ШУПАШКАРТИ ТАТА
РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ
ÇИНЧЕ
„ТРИ ТОВАРИЩА“
ЯТЛА КИНОКОМЕДИ
КĂТАРТМА ПУÇЛАÇÇĔ.
Режиссер—С. Тимошенко.
Рольсене вылякан артистсем:
Н. Баталов, А. Горюнов, М. Жаров.

Чăваш педагогика институчĕ
физикăпа математика
факультечĕн
(физика отделенийĕн)
пĕррремĕш курсне татах вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.
Вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисене 1953 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен илеççĕ.
ДИРЕКЦИ.

КИНО

«РОДИНА»—августăн 26-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Счастливое детство», ытти сеанссенче — «Ангел в отпуске»; сеанссем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00484 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20,000 экз.